Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммунӗ

1938 МАЙ 11 ЙУНКУН
106 (4919). №
21-мӗш ҫул тухать
ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ
Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—86
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Чукунҫула хӑвӑрт туса пӗтерессишӗн

Пирӗн социализм ӗҫӗнтерӗ ҫӗршывра чукунҫул транспӑрчӗ умӗнче ответлӑ та пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Вӑл задачӑсем тӗнчери лару-тӑру ҫивӗчленсе пынипе тата хамӑр ҫӗршывӑн халӑх хуҫалӑхӗ ӳссе пынипе туха тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ пирӗн парти, вӑйлӑ чукунҫул транспӑрчӗ тытакан пирӗн ҫӗршыв сталинла халӑх комисарне Л. М. Каганович йулташа татах Ҫулйӗр Халӑх Комиссарӗ пулса ӗҫлеме лартрӗ.

Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗн апрелӗн 28-мӗшӗнче пулса иртнӗ канашлӑвӗ Сталин йулташ патне йанӑ саламлӑ телеграммӑра Сталин йулташа кӗске срукрах чукунҫул транспӑрчӗ иртнӗ вӑхӑтсенче йышӑнса тӑнӑ малти вырӑна йышӑнасси ҫинчен ҫеҫ мар, тата ӗнӗ ӗҫ ӗнтерӳсем тӑвасси ҫинчен шантарнӑ. Актив канашлӑвӗ чукунҫул транспӑртӗнчи стаханӑвӑҫ-кривоносӑвӗҫсене, ударниксене, командирсене, политработниксене, инженерсене, техниксене, служӑшчисене тата ҫавнашкалах чукунҫул строительствисенчи работниксене большевикла ӗҫлеме тытӑнма чӗнсе каланӑ.

Анчах пайанхи куна Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строительствин управленийӗ ҫавӑнтан кирлӗ вывӑдсем туса хӗрӳлӗ ӗҫлеме тытӑнман-ха. Лини хывасси вӑрӑма чӑсӑлчӗ, лини хывса пӗтерме палӑртнӑ сруксем иртнӗ, анчах лини хывса пӗтермен. Шупашкара ҫитиччен тата 28 километр йулнӑ. Умра пысӑк ӗҫсем тӑраҫҫӗ: хӗллехи вӑхӑтра тунӑ клеткӑсене илме, трубасене, канавсене туса пӗтерме 264 пин кубла метр ҫӗр чавса купаламала, хывнӑ лини ҫине 160 пин кубла метр хӑйӑр сармала, служба тата пурӑнмали ҫуртсене тумала. Пӗтӗмпе 1938 ҫулта 12 мӗлйун тенкӗлӗх ӗҫсем тумала.

Халӗ ҫӗрӗҫне тума тытӑнман-ха. Екскаватӑрсем, скреперсем ахаль лараҫҫӗ. Ҫуртйӗр строительстви те хуллен пырать. Хальхи вӑхӑтра строительствӑра лини хывнӑ ҫӗрте 80 ҫын, ҫуртйӗрсем тунӑ ҫӗрте т. ыт. ӗҫсенче 130 ҫын ытларах ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ. Строительствӑ вальли ӗҫ вӑйӗ пухас тӗлӗшпе чылай организацисем нимӗн те тумаҫҫӗ. Строительствӑ управленийӗ (начальникӗ Вавилкин) ӗҫ вӑйӗ пухас тӗлӗшпе куллен ӗҫлес вырӑнне, республикӑри организацисем ҫине шанса ларать пулас. Ӗҫ вӑйӗ пухас тӗлӗшпе Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йанвар уйӑхӗнче ҫирӗппӗнех ӗҫлеме тытӑннӑччӗ, анчах хӗрӳ нумайа пымарӗ. Унтанпа ӗҫ вӑйӗ пухасси сӳрӗкленсе ытчӗ, ҫавна пула кӑҫалхи строительствӑ планне тултарасси каллех хӑрушлӑх умӗнче тӑрать.

Чӑваш халӑхӗ строительствӑ ӗҫне кӑҫал та пурнӑҫа кӗртсе ҫитермесӗр хӑварма никама та ирӗк памӗ. Чӑваш ӗҫ ҫыннисем чукунҫулне хӑвӑртрах туса пӗтерессишӗн сахал мар тӑрӑшрӗҫ. Трак, Ҫӗрпӳ, Ишлей тата ытти районсенчи колхозниксем хӗллехи вӑхӑтра пысӑк ӗҫсем турӗҫ. Вӗсем ҫак ответлӑ та кирлӗ ӗҫ ҫине социализмла пӑхас тӗслӗхе кӑтартрӗҫ. Чукунҫул строительствинче тулли кӑмӑлпа, пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлекенсем халӗ те сахал мар. Тӗслӗхшӗн, лини хывнӑ ҫӗрти С. Тарасӑв йулташ йертсе пыракан бригадӑнах илер. Унӑн бригади строительствӑ пуҫланнӑранпа ӗҫлесе ӗҫ техникине лайӑххӑн вӗренсе ҫитнӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем стаханӑвла ӗҫлеҫҫӗ. Анчах вӗсене тухӑҫлӑ ӗҫлеме условисем, майсем туса памашни пысӑк чӑрмав кӳрет.

Лини хывнӑ ҫӗрте материалсем тӑрӑтассине йӗркелеймени, рабочисен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатасси тата культурӑ ӗҫӗ начар пулса пыни ҫинчен сигналсем сахал пулман. Строительствӑ управленийӗ, строительствӑри партипе профсойуз организацисем вӑл сигналсене пӑчлантарса пыраҫҫӗ. Массӑ ыйтнинчен пӑрӑнса тӑма пикенекен руководительӗ, работник часах массӑ умӗнче шанчӑксӑра тухать,—ҫакна ӑнланса илес пулать чукунҫул строительствинчи руководителӗсен.

Чукунҫула хӑвӑртрах туса пӗтерсе хута йама строительствӑра куллен 3000 ҫын ӗҫлени кирлӗ. Ҫакӑн чухлӗ ӗҫ вӑйӗ пухассине ӑнаҫлӑн пурнӑҫа кӗртмешкӗн иртнӗ вӑхӑтсенче пулнӑ йӑнӑшсене пӗтермелле. Иртнӗ ҫулхи пек ӗҫ вӑйне ҫынсене шимене тата туйа пухнӑ пек меслетсемпе пухассине тӗппенех пӗтермелле, ӗҫ вӑйне организациллӗн пухмала. Иртнӗ ҫулта строительствӑра ӗҫлеме пӗр тӑруках пинщерӗн тухаччӗҫ, анчах усси сахал пулаччӗ. Мӗншӗн тесен ӗҫе кирлӗ пек организацилемен, ӗҫтухӑҫлӑхне ӳстерессине ҫинчен нихӑҫан та никам та ыйту лартман, социализмла ӑмӑртупа стаханӑвла йухӑм тивӗҫлӗ вырӑнта пулман.

Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн кивӗ, тӑшманла руководстви, строительствӑра ӗҫленӗшӗн ӗҫкунӗсемпе тӳлемелле тесе кӑтартса пани, йалхуҫалӑх уставне пӑсасси патне илсе пынӑ. Хӑшпӗр колхозсенче строительствӑра пӗр кубла метр ҫӗр чавса купаланӑшӑн пӗр ӗҫкунӗ панисем йе строительствӑра миҫе кун пулнине ҫеҫ шута илсе ӗҫкунӗсем панисем те сахал мар пулнӑ. Ку йӑнӑшсене тӳрлетнӗ, анчах вӗсем ҫинчен манмала мар.

Чукунҫул строительствин управленийӗн кӑҫал иртнӗ ҫулхи ӗҫ меслечӗсем ҫине шанмала мар. Ӗҫ вӑйне договӑрсем тӑрӑх организациллӗн пухас пулать. Ку тӗлӗшпе районри партипе совет организацисем ҫинче те пысӑк ответлӑх тӑрать. Парти райкомӗсен, райӗҫтӑвкомсен колхозниксем хушшинче политикӑла агитаци ӗҫне вӑйлатса вӗсене строительствӑра ӗҫлеме массӑллӑн организацилеме пулӑшмала.

Строительствӑ руководителӗсен, инженерла-техникла работниксен тата строймастӑрсен, стройкӑн пур участкисенче те ҫирӗп йӗркелӗх, дисциплинӑ туса пӗтӗм ӗҫе график тӑрӑх организацилемелле. Йӗркесӗрлӗхсене, ответсӑрлӑхсене тӗппенех пӗтерес пулать. Партипе профсойуз организацисен пӗтӗм рабочисен массине РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас ыйтусем тавра пӗтӗҫтерсе, вӗсен политикӑла тата производствӑлӑ активлӑхне ӳстерсе пымала.

Чӑваш ӗҫхалӑхӗ строителсенчен чукунҫула хӑвӑртрах туса пӗтерме ыйтать. Ӗҫ сиренте, йулташсем, строителсем. Чукунҫул ҫинче йалан ӗҫлекен кадрсем хатӗрлер, механизмсемпе туллин усӑ курар, социализмла ӑмӑртупа стаханӑвла йухӑма массӑлӑ йухӑм туса хурса, строительствӑ ӗҫӗсене вӑхӑтра пурнӑҫлар. Строительствӑшӑн хальхи хаклӑ тата лайӑх вӑхӑтпа туллин усӑ курма пӗтӗм республикӑри партипе совет организацисен, кашни колхозӑн чукунҫул строительствине пайанах пысӑк пулӑшу памала.

Армйан СС Республикӗн Верховнӑй Совет депутатне суйлама тӑратнӑ кандидатсене регистрацилесси пуҫланнӑ

ЕРЕВАН. Майӑн 9-мӗш. (ТАСС). Округсенчи суйлав комиссисем Армйан СС Республикӗн Верховнӑй Совет депутатне суйлама тӑратнӑ кандидатсене регистрацилеме тытӑннӑ.

Шихларск суйлав округӗнчи суйлав комиссийӗ депутата суйлама кандидата Мӗйти Исмаил Оглы Гамбаралийӗва—Агудӑ йалсовет председательне регистрациленӗ.

Брнакотск суйлав округӗнчи суйлав комиссийӗ депутата суйлама кандидата Сисиан йалӗнчи „Интернационал“ колхозри, паллӑ дойаркӑна, партире тӑмансқерне, Нанагуль Саркисӑвна Арутуньана регистрациленӗ.

Казахстанра суйлав умӗнхи пухусем пуҫланнӑ

Майӑн 8-мӗшӗнче Казахстан столицинче—Алма-Атара Казах СС Республикӗн Верховнӑй Совет депутатне суйлама кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе суйлав умӗнхи пухусем пуҫланнӑ. Алма-Ата станцин паравуссемпе вакунсен деповӗнчи рабочисен, служӑщчисен тата специалиссен суйлав умӗнхи пухӑвне 970 ҫын пынӑ.

— Казах СС Республикӗн Верховнӑй Совет депутатне суйлама пирӗн пӗрремӗш кандидат,—тесе ҫырнӑ пухура пулнисем йышӑннӑ резольуцире,—епӗр социализмла тӑван ҫӗршыври ӗҫҫынниссене савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса паракана тӑратӑтпӑр, вӑл йертсе пынипе Казахстан патша колонин аграрлӑ-феодаллӑ ҫӗршывран чечекленекен индустрилӗ-аграрлӑ ҫӗршыв, социализмла республика пулса тӑчӗ. Епӗр пирӗн тӑван учителӗ, тӗнчери пролетариатӑн ҫулпуҫне Сталин йулташа кандидата тӑратӑтпӑр.

Епӗр Казах СС Республикӗн Верховнӑй Совет депутатне суйлама кандидатсене В. М. Молотӑв, К. Й. Ворошилӑв, Л. М. Каганович, Н. И. Йежов тата Л. И. Мирзойан йулташсене тӑратӑтпӑр. (ТАСС).

Планӗрпа вӗҫмели ӑмӑрту

Майӑн 3-мӗшӗнче Тулӑ хулинче планӗрпа вӗҫмели Пӗтӗм Сойузри XIII-мӗш ӑмӑрту уҫӑлать. Програмӑра планӗрпа ахаль тата фигурӑсем туса вӗҫесси пулать. Кунсӑр пуҫне Совет Сойузӗнче планӗрпа малтанхи хут 100 километр тӑршшӗне вӗҫеҫҫӗ.

Ӑмӑртӑва хутшӑнма майӑн 9-мӗшӗччен 12 командӑ ҫыраннӑ. Кашни командӑра 2 планерис тата пилот. Ӑмӑртура пурӗ 20 командӑ ытла пулать. Совет планерисӑмӗн мастӑрӗсенчен ӑмӑртура Илченко, Расторгуйӗв тата М. Романӑв йулташсем пулаҫҫӗ. (ТАСС).

Ыраш пучах кӑларать

Днепропетровск облӑҫӗнчи чылай районсенчи колхозсен уйхирӗсенче кӗрхи тулӑ тата ыраш 50—70 сантиметр ҫӳллӗш ӳсне те ӗнтӗ, кӑнтӑрти районсенче метр ҫӳллӗшех ӳснӗ. Генически, Акимовски районсенче, облӑҫри тата ытти вуншар районсенче ыраш пуҫ кӑларма пуҫланӑ.

Генически районри „Красный Чонгар“ колхозӑн виҫӗ бригади майӑн 7-мӗшӗнче куракссене тата вылӑх апачӗ тума акнӑ ыраша ҫулма пуҫланӑ. (ТАСС).

Совет пианисӗсем Брӳҫҫӗле кайнӑ

Совет Сойузӗн ҫамрӑк пианисӗсем Йакӑв Флиер, Емиль Гилельс, Исаак Михновский тата Павел Ҫеребрйаков майӑн 9-мӗшӗнче Брӳҫҫӗле (Бельги) Ежен Изаи йачӗпе пулакан пӗтӗм тӗнчери конкурса хутшӑнма кайнӑ. Вӗсемпе пӗрле жӳри членӗ профессӑр-орденоносӗц, искусствӑн тава тивӗҫлӗ тейателӗ С. Е. Фейнберг кайнӑ. (ТАСС).

Совет Сойузӗпе Йапони хушшинчи хутшӑнусем пирки

Манчжурин официаллӑ агентстви Йапонин Корейри ҫарӗн тата Квантун ҫарӗн командованисен пӗлтерӳне пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав пӗлтерӳре таҫтан шухӑшласа кӑларнӑ провокациллӗ сведӗнисем пур. Вӗсем Корейӑпа Манчжури чиккисенче Совет пограничникӗсем Йапони ҫарӗсемпе тытӑҫма провокацисене тунӑ, тесе ҫыраҫҫӗ,—ун пекки вӑл нихӑҫан та пулман.

Ҫакӑн пирки ТАСС-а ҫапла пӗлтерме хушнӑ:—Совет пограничникӗсем чикӗсене пӑсни пӗрре те пулман, пулма та пултарайман, мӗншӗн тесен дисциплинӑлӑ совет пограничникӗсем чикӗсене пӗртте пасмасӑр тытса тӑрас пирки хӑйсене панӑ приказсене йаланах тӗрӗс пурнӑҫланӑ тата пурнӑҫлаҫҫӗ те.

Анчах, ҫав вӑхӑтрах, Йапонипе Манчжури ҫарӗсем совет чиккисене пасма хатлании пӗрре ҫеҫ мар пулнӑ, совет пограничникӗсем вӗсене йаланах кирлӗ пек сире-сире тӑкса пынӑ. Йулашки вӑхӑтра чикӗне ҫавӑн пекех пасна паллӑ тӗслӗх апрелӗн 11-мӗшӗнче Йапонин 11 ҫар самольочӗсем совет чикки урлӑ вӗҫсе касни пулса тӑрать,—унчухне Йапонин пӗр ҫар самольотне совет территоринче тытса чарнӑ.

Лайӑх пӗлсе тӑракан ҫынсен шухӑшӗ тӑрӑх, Йапонин Корейӑри ҫарӗпе Квантун ҫарӗн командованийӗсем Совет Сойузне хирӗҫ нихӑҫан пулман ӗҫсем ҫинчен шухӑшласа кӑларса провокаци тӗленмеле активлӑ сарни, пӗр йенчен, Йапони общӗствӑннӑҫӗн шухӑшне Китайри вӑрҫа фрончӗсенчи лару-тӑру ҫинчен тата Йапонин хӑйӗн ҫӗршывӗнчи лару-тӑру ҫинчен, сирсе йама тата, тепӗр йенчен, Йапони ҫарӗ йаланхи пекех Йапони халӑхне улталани, совет ҫӗршывӗпе Йапони хушшинчи хутшӑнусене йурийех ҫивӗчлетсе йама тӑрӑшни пулать. (ТАСС).

Пӗтӗм тӗнчери лару-тӑру ҫинчен

Гитлӗрпа Муссолини хушшинчи калаҫусем

Майӑн 3-мӗшӗнче Рима фашисла Германин диктатӑрӗ Гитлӗр пынӑ. Унпа пӗрле пысӑк ушкӑнпа чиновниксем тата ӑна сыхлакансем пынӑ.

Гитлӗр Римра мирлӗ ҫӗршывсем ҫине ҫӗнӗрен вӑрӑ-хурахла тапӑнасси ҫинчен Муссолинипе калаҫмала.

Италипе Германири фашисла захватчиксен йут ҫӗршывсене туртса илес ӗмӗчӗсем кунран кунах ӳссе пыраҫҫӗ. Урса кайнӑ агрессӑрсем Испани халӑхне хирӗҫ уҫҫӑнах интервенци туса пыраҫҫӗ. Итали хӑй Абиссинине тытса илнине йышӑнтарас тӗлӗшпе малтанах Англипе килӗшнӗ пулнӑ. Германи, Франци йенчен нимӗнле чарусем те пулманнипе тата Англи правительстви тӳррӗмӗнех пулӑшса пынипе, Австрине тытса илчӗ. Хальхи вӑхӑтра Гитлӗрпа Муссолини йут ҫӗршывсене туртса илмели черетлӗ ӗҫсен планӗсене сӳтсе-йаваҫҫӗ.

Паллӑ, Германи Чехословакине тытса илме хӑтланать. Анчах Чехословаки пӗр-пӗрне пулӑшас тӗлӗшпе Франципе тата ССР Сойузӗпе договӑр тунӑ. Гитлӗр хӑйӗн вӑрӑ хурахла планӗсене Муссолини пӗтӗмӗшпех ырлассине ҫеҫ кӗтмест, вӑл тата Франци Чехословаки хутне кӗрсен, Францине хирӗҫ пӗрле выступлени тума Муссолинипе ҫар сойузӗ те туса ҫирӗплетесшӗн.

Кунсӑр пуҫне, Гитлӗрпа Муссолини Дунай тата Балкан таврашӗнчи ҫӗршывсенчи территорисене валеҫесси пирки калаҫса татӑлаҫҫӗ.

Калаҫусене пӗтех те вӑрттӑн тӑваҫҫӗ. Йут ҫӗршывсен пичечӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Германи Чехословакине тытса илессипе Муссолини килӗшнӗ, Гитлӗра пулӑшма пулнӑ. Пичет пӗлтернӗ тӑрӑхах, Германин Румынире „уйрӑм интересӗсем“ пуррипе те Муссолини „килӗшмелле. Гитлӗр Италин Йугославинче „уйрӑм интересӗсем“ пуррипе килӗшмелле.

Римри ҫакӑн пек калаҫусем никамшӑн та кӗтменлӗх пулса тӑмаҫҫӗ. Фашисла диктатӑрсем иккӗшӗ те—Гитлӗр та Муссолини те—Йевропӑра вӑрҫӑ вутне чӗртсе йарас тӗллеве тытаҫҫӗ.

Чехословакири „Роте Фане“ хаҫат пӗлтерни

ПРАГА. Чехословаки компартийӗн тӗп органӗ „Роте Фане“ хаҫат майӑн 1-мӗшӗнчи номӗрӗнче „Германин пӗррӗмӗш салтакӗ Чехословаки чиккине каҫса кӗрсен, ҫав кун Советӑн 30 пин бомбардировщикӗ Берлин ҫинче курӑнӗҫ“ йатлӑ статйапа ҫакӑн пек пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ: Коминтерн йачӗпе тӑракан радиостанци нимӗҫ чӗлхипе пӗтӗм тӗнчене ҫапла асӑрхаттарать: „Епӗр Германи фашисӗсене асӑрхаттаратпӑр, вӗсем малашне йут ҫӗршыв ҫӗрӗсене туртса илес политикӑна тытса ан пычӑр. Мӗн пур ҫирӗплӗхпе епӗр ҫапла пӗлтеретпӗр: Берлин хӑйне мӗнле тыткаланинче Совет Сойузӗ лӑпкӑн тӑрса йулма пултараймӗ. Германин хальхи правительстви мӗнле майпа та пулин Чехословаки чиккине пӑсма хӑйсан, Берлин ҫинче советӑн 30 пин бомбардировщикӗ курӑнӗҫ. Совет Сойузӗ пур вӑхӑтра та тапӑнма хатӗр тӑрать—ҫакна Виҫҫӗмӗш империн манма йурамасть. Уйрӑмах ун ҫинчен Германи рабочисем пӗлсе тӑмала“.

ТАСС асӑрхаттарни.

Ҫак „Советӑн 30 пин бомбардировщикӗ“ ҫинчен пӗлтерни, тата ҫак пӗлтерӗве Коминтерн йачӗпе тӑракан радиостанци панӑ тени, пӗтӗмӗшпех шухӑшласа кӑларнӑ суйа сӑмах пулса тӑрать. Коминтерн йачӗпе тӑракан радиостанци ун пек пӗлтерӗве паман тата пама та пултарайман. Ҫак провокациллӗ пӗлтерӳ Рим хулинчи паллӑ радиостанци—„ИРС“ радиостанци урлӑ тухнӑ пулас. Ҫакна тупса палӑртнӑ: йулашки вӑхӑтра Италин ҫав „ИРС“ радиостанцийӗ тӗрлӗрен провокациллӗ тата совета хирӗҫле пӗлтерӳсене сарас тӗлӗшпе пӗрмай йах ӗҫлесе пырать. Ҫав пӗлтерӳсене вӑл Коминтерн йачӗпе тӑракан радиостанци урлӑ тухнӑ пек йе ССР Сойузӗнче пӗр вӑрттӑн радиостанци урлӑ тухнӑ пек туса пӗлтерет. Кунтан уҫҫӑнах курӑнать ӗнтӗ. Чехословаки компартийӗн органӗ „Роте Фане“ хаҫата „ИРС“ радиостанцинчи фашисла провокатӑрсем пӑтраштарнӑ.

Лигӑ наци Совечӗн 101-мӗш сессийӗ уҫӑлнӑ

Майӑн 9-мӗшӗнче Женевӑра Лигӑ наци Совечӗн 101-мӗш сессийӗ уҫӑлнӑ. Малтанхи лару уҫӑ лару пулнӑ.

Сессин ӗҫӗсенче ССР Сойузӗн Йут ҫӗршыв ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ Литвинӑв йулташ хутшӑнса ӗҫлет. (ТАСС).

ЙУТ ҪӖРШЫВСЕНЧЕ

Китайри вӑрҫӑ

Таньцзинь—Пукоу чукунҫулӗн ҫурҫӗр участкинче поражени тӳсне хыҫҫӑн Йапони командӑванийӗ апрел уйӑхӗн вӗҫӗнче Шаньдун провинцин кӑнтӑр пайне 150 пине йахӑн салтак илсе пырса, Ҫуйчжоу ҫине—Таньцзинь—Пукоу тата Лунхай чукунҫулӗсем пӗрлешнӗ ҫӗрте ларакан пысӑк хула ҫине—ҫӗнӗрен наступлени тума пуҫланӑ. Китай ҫарӗсем, Йапонӗцсем ытти фронтсенчи ӗҫсене начарлатнипе усӑ курса, пур фронтсенче те пӗтӗмӗшле наступлени тума пуҫланӑ.

Шаньдун провинцин кӑнтӑр пайӗнче, Таньцзинь—Пукоу чукунҫулӗ патӗнче, ӗҫсем ӑнманнипе йапонӗцсем хӑйсен сулахай флангне малала, ҫав ҫултан хӗвелтухӑҫнелле куҫарнӑ. Йапонӗц ен сылтӑм флангӗ Исйанре тытӑнса тӑрать. Фронт линийӗ 40 километра ҫити сарӑлса кайнӑ. Йапонӗцсен тылпа ҫыхӑну тытас ҫулӗ вӑрӑмланнӑ. Ҫакӑ вӑл Китай ҫарӗсене йапонӗцсем малала кайассине тытса чарма май панӑ. Китай ҫарӗсем, наттӑрӑн сыхланса, чылай участкӑсенче контрнаступлени тума пуҫланӑ.

Шаньси провинцинче Китай ҫарӗсем иккӗмӗш ерне хушши ӗнтӗ хӗвеланӑҫ йенчен ӑнаҫлӑ наступлени туса пыраҫҫӗ. Шаньси провинцин хӗвеланӑҫ пайӗнчи чылай пысӑк хуласене (Пусйань, Лиши, Сисйань тата ыт. те) йапонӗцсенчен тасатса, Китай чаҫӗсем ҫав провинцинчи пӗртен пӗр чукунҫул патне—Датун—Пучжоу чукунҫулӗ патне ҫитсе тухнӑ. Йулашки хыпарсем тӑрӑх, китайӗцсем Йапони гарнизонӗсене пурӗ 12 хулара йӑлтах аркатса тӑкнӑ. Йапони тылӗнче, Шаньси провинцин кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫ пайӗнче, вӑрҫакан Китай колонни Чанчжи Гаопин тата Йанчан йатлӑ хуласене йышӑннӑ.

Вӑтам Китайра лару-тӑру улшӑнман. (ТАСС).

Джерсей-Сити хулинчи (Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсем) профсойуз членӗсем, полици чарать пулин те, савӑтсенче профсойуз членне кӗме ыйтса листовкӑсем салатаҫҫӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Профсойуз агитатӑрӗсенчен пӗрне арӗслени. (Сойузфото).

Германири рабочисем фашиссен пусмӑрне хирӗҫ кӗрешеҫҫӗ

Чехословакири фашисӑма хирӗҫ кӗрешекен хаҫатсем Германири рабочисем хӑйсен пурнӑҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе кӗрешни ҫинчен ҫӗнӗ фактсем илсе кӑтартаҫҫӗ. Йулашки уйӑхсем хушшинче Германири промышлӗннӑҫлӑ чи пысӑк центӑрсенче забастовкӑсем пулса иртнӗ. Ҫав забастовкӑсенче рабочисем пӗтӗмпех йе мӗн чухлӗ те пулин ҫӗнтернӗ. Рур облӑҫӗнчи чылай районсенче горнякксем ҫине тӑрса кӗрешнипе вӗсен ӗҫ укҫине 6 процент ӳстернӗ, Саар облӑҫӗнче—5 процент ӳстернӗ.

Рабочисем фашисла чиновниксене—„доверенные по труду“ текенскерсене вырӑнтан кӑларма тата „доверенӑйсен совечӗсене“ ирӗклӗн суйламала тума час-часах ыйтма пуҫланӑ,—ҫав „доверенӑйсен совечӗсем“ текенскерсене фашиссем хапрӑксемпе савӑт комитечӗсем вырӑнне тунӑ. Рур облӑҫӗ тӑрӑх пӗр ҫул хушшинче рабочисем ыйтнипе 237 савӑтри „доверенӑйсене“ ӗҫрен кӑларнӑ, 186 „доверенӑй“ „хӑйсен ирӗкӗпе“ ӗҫрен пӑрахса тухса кайнӑ.

Ҫак фактсем Германири рабочисем хушшинче тӑрӑхни ӳссе пыни ҫинчен тата вӗсем савӑтсемпе хапрӑк хуҫисене хирӗҫ, фашиссен пусмӑрне, рабочисене выҫлӑхпа ҫуклӑх асапне кӗртсе ӳкерне фашисӑма хирӗҫ кӗрешни малала вӑйланса пыни ҫинчен калаҫҫӗ. (ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хӗвелтухӑҫри (Арагонири) фронтра республика ҫарӗсем майӑн 8-мӗшӗнче Куйевас де Винрома районӗнче (Сан Матеоран кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫнелле) пӑлхавҫӑсене вӗсен позицисенчен хӗссе кӑларнӑ. Винарозрен кӑнтӑрала республика ҫарӗсем малтанхи пекех пӑлхавҫӑсене малала Кастельон де ла Плана патнелле куҫма памасӑр тытса чарса тӑраҫҫӗ.

Ытти фронтсенче—улшӑнусем ҫук.

Майӑн 7-мӗшӗнче республикӑнӗцсем фашиссен пӗр самольотне персе антарнӑ. (ТАСС).

Йапонӗцсем химилӗ вӑрҫа хатӗрленеҫҫӗ

Китай правительствин Ҫар совечӗ ҫакӑн пек официаллӑ пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ: Йапони ҫарӗ Китайра химилӗ вӑрҫӑна анлӑн туса пыма хатӗрленет. Шаньдун провинцин кӑнтӑр пайӗнче фронта Йапони ҫарӗсен икӗ химилӗ батальонӗсем ҫитнӗ. Кунта пынӑ Йапонин ытти чаҫӗсенче те йатарласа тунӑ химилӗ командӑсем пур.

Чухӑн пурнаҫҫӗ

Львовра (Польшӑ) Украинӑ чӗлхипе тухакан буржуалӑ „Дило“ йатлӑ хаҫатра ҫак кунсенче Львов войеводствинчи (Хӗвеланӑҫ Украинӑн прикарпатски р.) Польшӑри Украинӑ хресченӗсен чухӑн пурнӑҫне кӑтартса паракан корреспонденци пичетлесе кӑларнӑ. Корреспонденцире ҫапла каланӑ: „Турцйанск уйезӗнче ҫак ҫулхи апрелӗн малтанхи икӗ ернинче хресченсен выҫӑпа 1 562 пуҫ вылӑх ӳксе вилнӗ. 20 пин пуҫ ытла вылӑх, урӑхла каласан, мӗн пур вылӑхсенчен 40—50 проценчӗ выҫӑпа начарланса кайнипе темиҫе ерне хушши ӗнтӗ картасенче тӑраймасӑр выртаҫҫӗ. Ҫулталӑк хушшинче 16.241 пуҫ вылӑх, урӑхла каласан, пӗтӗм вылӑхран 28 проценчӗ, вилнӗ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Тутаркас парторганизацинчи отчотпа суйлав пухӑвӗсен итогӗсем

Тутаркас районӗнче партин пуҫламӑш организацийӗсенчи отчотпа суйлав пухӑвӗсем 10 кун хушши пычӗҫ. Иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, отчотпа суйлав пухӑвӗсем активлӑрах иртрӗҫ, критикӑпа самокритикӑ та чылайах хӑпарчӗ. Анчах пур парторганизацинче те мар. МТС ҫумӗнчи парти пуҫламӑш организацинче самокритикӑ ҫителӗксӗр пулнӑ. Кунта отчотпа суйлав пухӑвне те палӑртнӑ кун туса ирттермен.

МТС-ри пуҫламӑш парторганизацийӗ партилӗ-политикӑлла ӗҫе йӗркелемен. Пӗр ҫулталӑк хушшинче пӗр ҫынна та парти ретне илмен. Хуҫалӑх ӗҫӗсем те кайа йулса пыраҫҫӗ. 1937 ҫулта ӗҫленӗ пӗр трактӑриссене 11 пин тенкӗ парса татман. Ҫавӑн пекех иртнӗ ҫулта горючисене тирпейлӗ тыткаламан пирки 13 пин тенкӗлӗх кирлинчен ытларах ҫунтарса йанӑ. МТС директорӗ пулса ӗҫленӗ Ҫипавӑ йулташ, механиксене, бригадирсене хӑваласа йарса пӗтернӗ. Ҫак пысӑк ҫитменлӗхсене пухура критиклемен. Райӗҫтӑвкӑн ҫумӗнчи парти пуҫламӑш организацинче те ҫавӑн пекех самокритикӑ начар пулнӑ. Анчах парторганизаци ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пулнӑ. Кунта политикӑлла сыхӑлӑх ҫӳлӗ вырӑнта тӑман пирки, халӑх тӑшманӗсем вылйах-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре сӑтӑрла ӗҫсем тунӑ. Парторганизаци ҫак сӑтӑрла ӗҫсене вӑхӑтра ӗҫтермен, ун ҫинчен отчотпа суйлав пухӑвӗнче те пӗр сӑмах та шарламан.

Отчотпа суйлав пухӑвӗсенче ПСК(б)П райкомӗн ӗҫӗсене критиклеҫҫӗ, кирлӗ сӗнӳсем параҫҫӗ.

Райӗҫтӑвком ҫумӗнчи пуҫламӑш организацисен пухӑвӗнче Астров йул. парти райкомӗ парти решенисене пурнӑҫа кӗртшне тӗрӗслес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртнӑ. Халӗхи вӑхӑтра район политикӑлла хуҫалӑхла чылай задачӑсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе кайа йулса пырать. МТС директорӗ райком ларӑвӗнче тракторсене йусаса пӗтернӗ, тесе райком секретарӗсене ӗнентернӗ. Анчах ҫуракине тухсан, трактӑрсем ӗҫлеме йурӑхлӑ марри палӑрнӑ.

ПСК(б)П райкомӗн секретарӗсем вырӑна туса уйрӑм коммуниссене пулӑшу паманнине, райком инструкторӗсем пуҫламӑш парторганизацисене начар пулӑшса пынине, уйрӑмах пӗччен коммуниссемпе ӗҫлеменнине палӑртнӑ. Парти кандидачӗ Бычков йулташ ҫапла калать, — „пирӗн пата райком инструкторӗсем хӑнана пынӑ пек пырса кайаҫҫӗ, куллехи ӗҫре пире пулӑшмаҫҫӗ".

ПСК(б)П райкомӗ ҫумӗнчи пуҫламӑш организацинчи коммуниссем райком секретарӗсем инструкторӗсемпе ҫителӗксӗр ӗҫленине хыттӑн критикленӗ. Ку критикӑ питӗ тӗрӗс, мӗншӗн тесен райком инструкторӗсене кирлӗ таран пулӑшса пыман. Кузейкин тата Архипӑв йултӑшсем ку таранччен партилӗ ӗҫе вӗренсе ҫитмен, вӗсем халӗ райком инструкторӗсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Паллах вӗсене вӗрентни, ӗҫре пулӑшни кирлӗ.

Отчотпа суйлав пухӑвӗсенче 134 коммунисран 118 коммунис прениире тухса калаҫнӑ. Коммуниссем парторганизацисен ӗҫӗсене ҫеҫ мар, райком ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене те хытӑ критиклерӗҫ. 13 парторгран 4 парторга ҫӗнӗ ҫынсене лартнӑ. Суйлав пухӑвӗсене ирттернӗ хыҫҫӑн, парторганизаци татах ӳсрӗ, ҫирӗпленчӗ. Партилӗ политикӑлла ӗҫ те лайӑхланчӗ. Анчах парторганизаци умӗнче татах пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Халӑх хуҫалӑхӗн 1938 ҫулхи планне пурнӑҫламала, йалхуҫалӑхӗнче кашни гектар пуҫне 100 пӑтран кайа мар тӗштырӑ туса илессишӗн кӗрешмелле. РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсене пысӑк пахалӑхпа ирттересси парторганизацин задачи пулса тӑрать. Тутаркас районӗнчи парторганизаци халӗ ҫак политикӑлла задачӑсене пурнӑҫлассишӗн пӗтӗм вӑйа хурса кӗрешет.

Анисимӑв. Бирӳков.

Ленинисӑма вӗренекен заочниксен конференцийӗ

Майӑн 3—8-мӗшӗсенче Шупашкарти ленинисӑма вӗренекен заочниксен конференцийӗ пулса иртрӗ. Конференцире „Национальный вопрос" тата „Стратегия и тактика" темӑсене вӗреннӗ.

Конференцине 16 ҫын пымала пулнӑ, анчах кунта кашни кунах заочниксен шучӗ улшӑнса тӑрать. Малтанхи кун 6 ҫын, тепӗр кун 8 ҫын, пилӗкӗмӗш кун 11 ҫын, йулашки кун 9 ҫын пулчӗҫ. Кунта пуринчен ытла ИМЗО дирекцийӗ те айӑплӑ. Конференцисем йӗркелӗ, планпа пулса пымаҫҫӗ. Йулашки конференцине 4 хут улӑштарнӑ. Малтан конференцине апрелӗн 19-мӗшӗнче пухма шутланӑ, конференци пулман. Ун хыҫҫӑн конференцине майӑн 3-мӗшӗнче тума палӑртнӑ. Кайран „конференци майӑн 7-мӗшӗнче пулать", тесе заочниксене пӗлтернӗ. Йулашкинчен Зайцӗв преподавател „конференцине пайанах ирттермеле, майӑн кайран вӑхӑт пулмасть" тесе майӑн 3-мӗшӗнче ирхине заочниксене конференцине пухма тытӑннӑ. Заочниксенчен хӑшӗпӗрисем конференци майӑн 7-мӗшӗнче пулать, тесе командировкӑсене кайнӑ. Ҫавӑнпа конференцине заочниксем пурте пыман. Иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, вӗренӳ пахалӑхӗ начарланни палӑрать. Иртнӗ ҫулта заочниксем парти историне Ленин-Сталин произведенийӗсем тӑрӑх вӗреннӗ, вӗренекенсенчен ҫурри ытла лайӑх тата отличнӑ паллӑсемпе вӗренсе пынӑ. Кӑҫал та ҫав заочниксемех ленинисӑма вӗренеҫҫӗ, анчах ӗҫ урӑхла. Йулашки конференцинче 11 ҫынтан 4 ҫын ҫеҫ лайӑх отметкӑсем илнӗ, иккӗмӗш темӑпа 4 ҫын зачотсем паман. Конференцинче карттӑпа усӑ курмаҫҫӗ. Ҫак ҫитменлӗхсем вӗсем заочнӑ вӗренӗве йӗркелемен пирки пулса пыраҫҫӗ. Вӗренекенсем хӑйсем тӗллӗн ӗҫлессине организацилемен, конференцисене темӑ тӑрӑх хатӗрленмесӗр пыраҫҫӗ. Пӗтӗм вӗренӳ конференцинче пулса пырать. Паллах ҫакӑн пек вӗренни кирлӗ результатсене памасть. Ҫавӑнпа йулашки конференцинче Уханӑвпа Сурӑв заочниксем 6 кун хушши конференцире ларнӑ хыҫҫӑн та, вӗреннӗ темӑсем тӑрӑх зачотсем параймам.

ИМЗО пуҫлӑхӗсем вӗренекенсене заңатисем хушшинче вӑхӑтра кирлӗ пек пулӑшу парасси ҫинчен иртнӗ ҫултанпах калаҫаҫҫӗ, анчах ку ӗҫе тумаҫҫӗ. Вӗренекенсене ваљљи консуљтаци организацилемен. ИМЗО преподавателӗсенчен хӑшпӗрисем заочниксене тӗплӗн пӗлмеҫҫӗ те.

Преподавателӗсем кашни вӗренекенпе уйрӑмӑн ӗҫлемен пиркийех заочниксем вӗренӳре кайа йулса кайнӑ. Колпаков, Степанӑв, Стеклов заочниксем 3-шер темӑпа, Суров, Енчиков, Винокуров 2-шер темӑпа зачотсем паман.

Парти Тӗпкомӗ ҫумӗнчи институт паракан радиолекцисене итлесси заочнӑ вӗренӳре пысӑк вырӑн йышӑнмала. Йулашки вӑхӑтра ку ӗҫе те йанӑхтарса йанӑ. Заочниксенчен чылайӗшӗ радиолекцисене итлесе пымаҫҫӗ. ИМЗО руководителӗсем конференцисене пырса та курӑнмаҫҫӗ.

Парти Обкомӗ „ИМЗО-на—Белорусӑв йулташа заочниксен кружокӗсенче заңатисене идейӑлӑ-теорилӗ пысӑк ҫӳлӗшре ирттерессине тума хушас" тесе йышӑннӑ постановленине сӑмахпа мар, ӗҫре пурнӑҫламала.

П. Перлов.

Пухусем пысӑк активлӑхпа иртрӗҫ

Районри пур пуҫламӑш парторганизацисенче те отчотпа суйлав пухӑвӗсем пулса иртрӗҫ. Пур ҫӗрте те пухусем пысӑк активлӑхпа, идейӑлӑ-политикӑлӑ тӗлӗшрен пысӑк ҫӳлӗшре тата организациллӗн иртрӗҫ.

Районра 22 пуҫламӑш организаци, кандидатсен группи 3. Районри 153 коммунисран 140-шӗ пухусенче пулнӑ, прениире 99 ҫын пуҫламӑш организацисен тата райком отчочӗ тӑрӑх тухса калаҫнӑ.

Парти органӗсен суйлавӗн малтанхи итогӗ парти организацисен идейӑлӑ тата политикӑлӑ пӗрлӗхне, Сталинла Тӗп Комитет тавра тачӑн пӗтӗҫсе тӑнине ӳсҫӑн кӑтартса парать. Коммуниссем сыхӑлӑха ӳстерес тата халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ пӗр шеллемесӗр кӗрешсе пырас ыйтӑва мӗн пур ҫивӗчлӗхпе лартаҫҫӗ. Тухса калаҫакансем халӑх тӑшманӗсем тунӑ сӑтӑрла ӗҫсен йулашкийӗсене пӗтерес, идейӑла тата политикӑлӑ пӗлӗве ӳстерес, парти кандидачӗсемпе, сочувствуйушчисемпе ӗҫлессине лайӑхлатас, кадрсене пысӑкрах ӗҫсене куҫарса пырас тата ҫӗнӗ актива вӗрентсе ӳстерес ыйтусем ҫине кӑтартса хӑварчӗҫ. Ҫавнашкалах, малашне парти организацисемпе партире тӑман массӑсем хушшинчи ҫыхӑнӑва ҫирӗплетес ыйтӑва та пысӑк вырӑна хураҫҫӗ.

Ҫӗнӗ парторгсен составне ӗҫре тӗрӗсленнӗ, парти ӗҫне чӗререн йуратса ӗҫлекен йултӑшсене суйларӗҫ.

Пур организацисенче те суйлава, хӑшпӗр ҫитменлӗхсемсӗр пуҫне, ПСК(б) Партин Тӗп Комитечӗн кӑтартӑвӗсене ҫирӗп пӑхӑнса иртернӗ. Коммуниссем кашни кандидатурӑна тӗплӗн сӳтсе йавса, унӑн ӗҫри пултарулӑхне шута илсе суйларӗҫ.

22 пуҫламӑш парторганизацинчен 8-шӗ кӑна ҫителӗклӗ ӗҫленӗ тесе хак панӑ. Ҫав хушӑрах 2 организацин руководителӗсен ӗҫне хак памасӑрах хӑварнӑ. Вӗсем начар ӗҫленӗ. Пилӗк организацин руководителӗсене ҫӗнӗрен суйланӑ. Ӗлӗкхи руководителӗсенчен: Мӑн Чурашрӑ—Александрӑва, Уй-кассинче—Леонтйӗва, ҫу савӑтӗнче—Шумилӑва тата вӑрман хуҫайствинче—Тарасӑва ӗҫре коммуниссенчен уйӑрӑлса кайнӑ пирки тата хӑшпӗрисем коммунис йатне вараланӑ пирки вӗсене парти органне суйламан.

Кусемсӗр пуҫне суйлав вӑхӑтӗнче йанӑшсем те пулнӑ. Йӗкӗтри пуҫламӑш организацинче Муравйов йулташа парти организацин руководителне суйланӑ пулнӑ. Муравйов Йӗкӗтри парти организацинче членра та тӑман.

Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн районри уйрӑмӗ ҫумӗнчи организацинче парторгӑн заместительне уҫҫӑн сасӑласа суйласа хӑварнӑ. Ку йанӑшсене райкомра йатарласа сӳтсе йавса, суйлава тепӗр хут ирттермеле тунӑ.

Планпа палӑртса хунӑ вӑхӑтра пуху пуҫтарӑнманни те пулнӑ. Мӑн Чурашри пуҫламӑш организацин руководителӗ Александрӑв коммуниссене пуху пулассйне пӗлтерме манса кайнӑ. Ку енӗтӗ Александрӑв отчотпа суйлав пухуне мӗнле хатӗрленнине тӳрремӗнех кӑтартса парать.

Ҫитес кунсенчех районсенче парти организацийӗсен районти пухӑвӗсем пуҫланаҫҫӗ. Районри пухусенче коммуниссен, парти организацисен политикӑлӑ сыхӑлӑха ӳстерес, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ пӗр хӗрхенмесӗр кӗрешсе пырас ыйтӑва мӗн пур ҫивӗчлӗхпе лартмала, парти организацисен идейӑлӑ тата политикӑлӑ пӗрлӗхне тӗреклетмеле, партири тата партире тӑман массӑсене Сталинла Тӗп Комитет тавра татах та вӑйлӑрах пӗтӗҫтерессишӗн кӗрешмеле.

Йӗтӗрне р. **К. Мельникӑв.**

Суйлав саккунне вӗренеҫҫӗ

Пошнарти (Йӗтӗрне р.) Мичурин йачӗпе тӑракан колхозра РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совет суйлавӗсене хатӗрленес ӗҫ вӑйланса пырать. Йалти пӗтӗм суйлавҫӑсем суйлав саккуне вӗренмели кружоксене ҫӳреҫҫӗ. Кружоксене комсомолецсем, учительсем ертсе пыраҫҫӗ. Суйлав саккунне кружоксенче вӗреннисӗр пуҫне, кашни кунах, кас-кас халӑх урамсене тухсан, агитаторсем суйлавҫӑсем хушшинче ССР Союзӗн Верховнӑй Совет суйлавӗн итогӗсемпе пулас суйлавсем ҫинчен калаҫусем ирттереҫҫӗ. Суйлавҫӑсем кашниех: — Ийунӗн 26-мӗшӗнче, РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали кун, епӗр пурте пӗр ҫын пек пулса суйлав ҫуртне пыратпӑр. Хамӑрӑн сасӑсене коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн паратпӑр, — теҫҫӗ.

Г. Корольков.

Колхозри чи лайӑх ҫынсене уйӑраҫҫӗ

Сӗнтӗрвӑрри. Майӑн 10-мӗш (телефонпа). Участкӑсенчи суйлав комиссийӗсене чи лайӑх, колхозри тата производствӑри чи палла ҫынсене уйӑраҫҫӗ. Вӑрманкасси участкинчи суйлав комиссин председателӗ Алексей Николаевич Ластачкин йулташа уйӑрнӑ. Вӑл ӗҫре хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартнӑ комсомолец. Ластачкин йулташ „Культура" колхозри комсомол пуҫламӑшӗн организаторӗ, колхоз правлени членӗ, хӑмла ӗҫ бригадин бригадирӗ пулса ӗҫлет.

Участкӑри суйлав комиссин председатель заместительне колхозри 3-мӗш бригадӑн бригадирӗ Иван Иванович Иванов йулташа уйӑрнӑ. Ку бригада йаланӑх ытти бригадӑсенчен малта пырать. Кӑҫалхи ҫуракине те ытти бригадӑсенчен малтан, лайӑх пахалӑхпа ирттернӗ.

Суйлав комиссин членӗсем пулса ӗҫлеме те колхозри чи лайӑх ҫынсене уйӑрнӑ.

П. Задорин.

Сталин йулташ докладне итлеҫҫӗ

ҪӖРПУ. Тавӑшкасси йалсоветӗнче пур суйлавҫӑсене те суйлав саккунӗсене вӗренес ӗҫе хутшӑнтарнӑ. „Коминтерн", „Машиностроя" колхозсенче суйлав саккунне вӗренмели кружоксем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Агитаторсем суйлав саккунӗ ҫинчен анлантарнӑ хыҫҫӑн, колхозниксем час-часах Пӗтӗм Союзри Советсен XIII мӗш Чрезвычайнӑй Съесӗнче Сталин йулташ ССР Союзӗн Конституцин проекчӗ ҫинчен тунӑ доклада итлеҫҫӗ.

Г. Шумилӑв.

„Чӑваш Коммунӗ"-пе усӑ куратпӑр

(Красноармеец ҫырӑвӗ)

Белоруссии ҫар округӗнчи, епӗр пурӑнакан ҫар часӗнчи хӗрлӗармеецсемпе командирсем тата политработниксем хушшинче БССР Верховнӑй Совет суйлавне хатӗрленесси сарӑлса пырать. БССР Верховнӑй Советне суйламалли Положенине Конституцине тӗплӗн вӗренсе пыратпӑр.

Кунпа пӗрлех, епӗр хамӑрӑн Чӑваш АССР тата РСФСР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсене хатӗрленесси мӗнле пынипе те интересленетпӗр. Чӑваш республикин пӗтӗм ӗҫӗсене пӗлсех тӑратпӑр. Ҫак йӗнӗпе пире хамӑр республикӑре тухакан хаҫатсене ҫырӑнса илни пулӑшать. Март уйӑхӗнчен вара „Чӑваш Коммунӗ" хаҫата илсе тӑратпӑр. БССР Верховнӑй Советне суйламалли Положенипе Конституцине вӗреннӗ ҫӗрте „Чӑваш Коммунӗ" хаҫатра пичетленсе тухнӑ статйасене вуласа усӑ куратпӑр.

Тӑван чӗлхепе ҫырнӑ хаҫатсем пире политикӑна вӗренме ҫӗрте те пулӑшаҫҫӗ.

И. Потапӑв.

565 колхозник—кружокра

ИШЕК (Ишлей р.). Йалсоветне кӗрекен йалсене суйлав саккунӗсемпе Сталинла Конституцине вӗренес ӗҫ хӗрӳллӗн пырать. Агитаторсем РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли кун ҫинчен йышӑннӑ постановленине хаҫатсем ҫинче пичетленсе тухсан пухусем туса суйлав кунӗ ҫинчен анлантарчӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совет суйлавӗсене ийунӗн 26-мӗшӗнче ирттермеле тунишӗн тулли кӑмӑлпа савӑнаҫҫӗ. РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене депутата тӑван ҫӗршывӑн чи шанчӑклӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсене, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн чӗререн парӑнса ӗҫлекен ҫынсене суйлатпӑр, теҫҫӗ колхозниксем.

Халӗ агитаторсем политикӑлла агитаци ӗҫне анлӑн туса пыраҫҫӗ. Йалсоветӗнче илсен, 28 кружокра суйлав саккунне вӗренеҫҫӗ. Кружоксенче 565 колхозник, вӗсенчен 318-шӗ колхозницӑсем. Суйлав саккунӗсемпе Сталинла Конституцине вӗрентес ӗҫре уйрӑмах агитатор 3. Йемелйанӑв йулташ тӑрӑшса ӗҫлет. Вӑл 7 занятти ирттернӗ. Хӑй ҫумнӗ ҫирӗплетнӗ суйлавҫӑсене 100 процентпех суйлав саккунне вӗрентес ӗҫе хутшӑнтарнӑ.

Арк. Наумӑв.

Тыл ҫине сывлӑшран тапӑннинчен сыхланасси

1914—1918 ҫулсенчи империализмла вӑрҫӑ пуҫланнӑ тӗле нимӗҫсен 232 самољот тата 11 дирижабӗл пулнӑ. Французсемпе англичансенне пӗрле илсен те 186 самољот ҫеҫ пулнӑ.

Ҫав тапхӑрти пысӑк тата кӑнттам самољотсем питӗ тӗрексӗр пулнӑ, вӗсене часах персе ӳкерме, ҫӗмӗрме пултарнӑ. Вӗсен моторӗсем сахал вӑйлӑ, 70—80 лаша вӑйӗ чухлӗ пулнӑ. Ҫав вӑхӑтри чи лайӑх самољотсем сехетре 100 километртан ытла вӗҫме, 50—70 килограмран ытла усӑллӑ груз тийеме пултараймаҫ. Ҫавӑн чухлӗ груз тийесен самољотсем чи лайӑх чухне те 2000 метӑртан ҫӳле вӗҫсе хӑпараймаҫ. Ҫапла пулин те вӑрҫӑ пуҫлан ан малтанхи кунсенчех самољотсемпе дирижабӗлсем противникӑн хулисемпе йалӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахас ӗҫе хутшӑннӑ.

Германи дирижабӗлӗсем 1914 ҫулти августӑн 5-мӗшӗнче Лйеж хули ҫине бомбӑсем пӑрахса, сывлӑшри вӑрҫӑ кампанине пуҫласа йанӑ. Ҫав хула ҫине сывлӑшран тапаннӑ хыҫҫӑн, Антверпен, Кале, Остенде, Нӑнси, унтан Лондӑнпа Париж ҫине бомбӑсем пӑрахма тытӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахмали хатӗрсем ҫителӗксӗр тата пахалӑхӗ начар пулнӑ пулин те, Германи самољочӗсем Англипе Францин тата Италин хулисемпе ҫаршӑн кирлӗ вырӑнсем ҫине 27,5 пин тоннӑ бомба пӑрахнӑ. Хуласемпе йалсем, ҫар хатӗрӗсем усракан вырӑнсем ҫине нумай хутчен бомбӑсем пӑрахнӑ. Венеци ҫине—36 хутчен, Пола ҫине—40 хутчен, Лондӑн ҫине—116 хутчен бомбӑсем пӑрахнӑ. Лондӑн ҫине бомбӑсем пӑрахас ӗҫе пурӗ 450 самољот тата темиҫе теҫетке дирижабӗл хутшӑннӑ. Лондӑн ҫине тапаннӑ бомбардировшчиксем ҫуртйӗрсене, саватсемпе хапрӑксене ҫӗмӗрнисӗр пуҫне, 1.446 ҫынна вӗлернӗ, 3.500 ҫынна суранлатнӑ. 1918 ҫулта кӑна Германи бомбардировшчикӗсем Париж ҫине 32 хутчен тапаннӑ; ҫав ӗҫе 483 самољот хутшӑннӑ.

Сывлӑшран тапӑннисем хӑшпӗр чухне питех те хытӑ туйӑнтарнӑ. Ку тӗлӗшпе Германи авиацийӗ 1918 ҫулти май уйӑхӗнче Францин Блйарж тата Сенйевил патӗнчи артиллери склачӗсем ҫине тапӑнни питӗ усҫӑн курӑнса тӑрать. Ҫав пунктсем ҫине Германи авиацийӗ ҫӗрле тӑватӑ хутчен тапӑнса, 12.000 тоннӑ снарйад, пӑшал тата пулемет патронӗсене 70 мӗлйун штук пӗтерсе хума пултарнӑ. Германи авиацийӗ Англин Кале хули ҫине тапӑнсан тата ытларах ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Англи Кале хулине хӑйӗн ҫарӗн автомобил запасӗсене пуҫтарнӑ пулнӑ. Германи авиацийӗ ҫав хула ҫине ҫӗрле икӗ хутчен тапӑннине тата бомбӑсем пӑрахнине пула пушар тухнипе Англи ҫарӗн автомобил вайӗсен запаслӑ пайӗсен ҫуррине пӗтернӗ, сийен 125 мӗлйун тенке ҫитнӗ.

Бомбӑсем пӑрахакан авиаци инҫетри тылшӑн пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑрсан, вӑрҫа хутшӑннӑ ҫӗршывсем пурте сывлӑшран тапӑнисенчен сыхланас ӗҫе анлӑн тума тытӑннӑ. Ҫапла, 1918 ҫулта Лондӑна сыхлама Англи ҫарӗн командӑй тата рйадовой составӗнчен 30 пин ҫынна хутшӑнтарнӑ, 282 истребител, зенитлӑ (тӳпене перекен) тупӑсем 266, прожекторсем 353 пулнӑ. Германи тылне сывлӑшран тапӑнассинчен сыхлама зенитлӑ тупӑсем 2576, прожекторсем 717, темиҫе ҫӗр истребител, 58 пин ҫын кирлӗ пулнӑ.

Империалисӑмла вӑрҫӑ пынӑ ҫулсенче, 1914 ҫулхипе танлаштарсан, Хӗвеланӑҫ Йевропӑри государствӑсен ҫарӗсенчи зенитлӑ тупӑсен хисепӗ 100 хут ытларах нумайланнӑ, вӑрҫӑн йулашки тапхӑрӗнче 8 пине ҫитнӗ. Зенитлӑ орудисем персе ӳкернӗ самољотсен хисепӗ 3.000 ҫитнӗ, ҫав шутран 40—45 процентне 1918 ҫулта персе ӳкернӗ, мӗншӗн тесен ку вӑхӑт тӗлне зенитлӑ артиллерин материаллӑ пайӗсем чылай лайӑхланнӑ.

Сывлӑшран тапӑннинчен сыхланмали унчухне зенитлӑ тупӑ ҫеҫ мар, противникӗн авиацине хирӗҫ тӑмали ҫӗнӗ витӗмлӗ май—картламали аеростат пулнӑ. Маскировкӑ, чи малтан ҫутӑлӑ маскировкӑ, пысӑк вырӑнта тӑнӑ.

Англипе Франци истребителӗсем сывлӑшра ҫапӑҫнӑ чухне Германин 3.138 самољотне персе ӳкернӗ, ҫав вӑхӑтрах нимӗҫ истребителӗсем Франципе Англинне хӗвеланӑҫпе хӗвелтухӑҫ фрончӗсенче 5.000 самољот ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Сывлӑшран тапӑннинчен сыхланмали хатӗрсене мобилизацилениле малала йарса пыни бомбардировшчиксен ӗҫне пит кансӗрленӗ. 1918 ҫулта Париж ҫине тапӑнас ӗҫе хутшӑннӑ Германин 483 самољотӗнчен 37-шӗ ҫеҫ тӗлленӗ вырӑна ҫитме пултарнӑ, вӗсенчен те 13-шне персе ӳкернӗ. 1918 ҫулта Германи самољочӗсем Англи ҫӗршывӗ ҫинче вӗҫсе ҫӳреймен.

Империалисӑмлӑ вӑрҫӑн хура кунӗсенчен пире 20 ҫул хушши уйӑрса тӑрать, ҫав ҫулсем хушшинче авиаци хӑйӗн ӳсӗмӗпе чылай малала кайӗ.

Бомбӑсем пӑрахакан халӗхи вӑхӑтри самољот 1916—1918 ҫулхи самољотсенчен виҫӗ хут ытларах хӑвӑрт вӗҫет. Хӑшпӗр уйрӑм йышши, 2—3 тоннӑ бомба ҫӗклесе хӑпаракан самољотсем 8—9 пин метр ҫӳлӗш вӗҫсе хӑпараҫҫӗ, сехетре 400 километр ытла вӗҫеҫҫӗ.

Вӑтам бомбардировшчиксем (икӗ моторлисем) хӑйсен аэродромӗсенчен 1.000 километр ытларах инҫете кайма, йавӑр бомбардировшчиксем (нумай моторлисем) чылай чухне 2.000 километр таран инҫе вӗҫсе кайма пултараҫҫӗ.

Бомбӑсем пӑрахакан авиацине хӗҫпӑшаллантарасси нумай ҫӗнелнӗ, бомбӑсене тӗлрех пӑрахаҫҫӗ, авиобомбӑсем шӑтарма тата ҫӗмӗрме пултарасси вӑйланнӑ.

Ҫаксем пурте пулас вӑрҫӑра авиаци питӗ вӑйлӑ тата хӑрушӑ пулмалине шута илтереҫҫӗ. Фашисла вӑрӑ-хурахсем Испанипе Китайӑн мирлӑ халӑхӗсене сывлӑшран тапӑнса мӗнле пӗтернине епӗр хамӑр куҫпа куратпӑр. Фашиссен авиацийӗ Испанин хулисене ҫӗмӗрсе пӗтерет, авиаци бомбисем йӑтӑнтарнӑ ҫуртсем айӗнче етемлӗх ӗмӗрсем хушшинче тунӑ культурӑн паха йапалисем пӗтеҫҫӗ. Авиаци сывлӑшран тапӑннипе темиҫе пин ҫын вилет, суранланать. Барҫелонӑ ҫине виҫӗ кун хушши (мартӑн 16-мӗшӗнчен 19-мӗшне ҫитиччен) тапӑннӑ чухне 1.300 ҫын вилнӗ, 2.000 ҫын суранланнӑ. Китайри Йапони авиацийӗ промышлӗннӑҫлӑ хуласене, економикӑлӑ тата ҫар хатӗрӗсемпе ҫар тӑнӑ вырӑнсене ҫеҫ мар, ҫавӑн пекех йалсемпе халӑх сахал пурӑнакан пӗчӗк вырӑнсене те ҫӗмӗрсе пӗтерет. Ҫав пӗчӗк йалсемпе вырӑнсем вӑрҫӑ ӗҫӗнче нимӗн вырӑнӗнче те тӑмаҫҫӗ, анчах вӗсене Йапони авиацийӗ ҫаплах ҫӗмӗрет.

Анчах кучухне сывлӑшран тапӑннинчен сыхланса противникӑн бомбӑсем пӑрахакан авиацине хирӗҫ кӗрешме кирлӗ хатӗрсем ҫителӗклӗ пур. Йулашки ҫулсенче шултӑра калиберлӑ зенитлӑ тупӑсем (100—150 миллиметӑрлисем) курӑна пуҫларӗҫ, вӗсем 25 километр инҫе пеме, 16 километр ҫӳллӗш вӗҫекен самољота персе тивретме пултараҫҫӗ. Хӑвӑрт перекен тупӑсем нумайланчӗҫ. Ҫӗнӗ образецлӑ пӗчӗк калиберлӑ зенитлӑ тупӑсем минутра 250 снарйад таран кӑларса йама пултараҫҫӗ.

Кучухнехи зенитлӑ батарейсене нумайӑшне тӗп управленипе перекен тунӑ, вӗсем снарйад ӑҫта кайса ӳкмелине автоматла шутласа кӑлараҫҫӗ. Зенитлӑ батарейсене ҫӗнӗ йышши прожекторсем параҫҫӗ, вӗсен ҫутӑ вӑйӗ 800 мӗлйун ҫурта чухлӗ пулать, противникӑн бомбардировшчикӗсем зенитлӑ артиллерин позицине ҫитиччен 22 километр пулнӑ чухне вӗсен сассине тытакан машинӑсем панӑ.

Картламали ҫӗнӗ типлӑ аеростатсем („сывлӑшра темиҫе хутлӑхлӑ" пулаҫҫӗ) хурҫӑ вӗренсене 4.000 метр ҫӳллӗш сывлӑша ҫӗклесе хӑпартма пултараҫҫӗ. Ҫавнашкал аеростатсем, вӗсем ҫителӗклӗ пур чухне, хурҫӑ вӗренсем усӑнтарса чӑрмав тӑваҫҫӗ, ку вӑл бомбардировшчиксемшӗн питӗ хӑрушӑ. Самољот аеростат карса хунӑ хурҫа вӗрен ҫине пырса ҫапӑнсан хытӑ ҫӗмӗрӗлет, вӑл йалтах пӗтме пултарать.

Противникӑн пур йышши авиацине те хирӗҫ кӗрешмели кирлӗ хатӗрсенчен пӗри кучухнехи хӑвӑрт вӗҫекен истребител-самољот пулать, унӑн тупӑ, хӑшпӗр чухне бомба пӑрахмали хатӗрсем пур.

Халӑх нумай пурӑнакан вырӑнсене (уйрӑмӑн илсен Лондӑна) сывлӑшран тапӑннинчен сыхланмали Англи ҫиҫтемине унка йеверлӗ тӑваҫҫӗ. Противник самољочӗсем бомба пӑрахмали тӗле ҫитиччен малтан вӗсем ҫине истребителсен тапӑнмала, зенитлӑ артиллери вутӗнчен каҫса каймала, аеростатсен пралук карти урлӑ каҫса каймала, артиллери шутсӑр вӑйлӑ пенӗ чухне тин самољотсен бомбӑсем пӑрахма тивет.

Тылри пунктсен оборонине ытти ҫӗршывсенче те ҫав ҫиҫтемӑпа организацилеҫҫӗ. Анчах сывлӑшран тапӑннинчен ҫак майсемпе тата ҫав хатӗрсемпе сыхланасси ҫине шанма ҫук. Республикӑлӑ Испани ҫарӗ пӑлхавҫӑсемпе интервентсен авиацине хирӗҫ кӗрешнӗ опӑт халӑх пурӑнакан вырӑнти пур ҫынсене вырнаҫтармалӑх ҫӗрайне тарса пытанмалисем тума кирлине кӑтартать. Ҫавнашкал ҫӗр айне тарса пытанмалисене республикӑлӑ Испани хулисенче питӗ нумай тунӑ, ҫакӑ вӑл революцилӗ Испани халӑхӗн темиҫе вунӑ пин ҫынӑн пурнӑҫне ҫӑлса хӑварчӗ.

Авиаци хӑвӑрт сарӑлса кайакан пушарсем кӑларакан вут тивертекен бомбӑсем пӑрахнӑ май, пушартан сыхланас ӗҫе организацилени пысӑк вырӑнта тӑрать. Францире доброволӗцсенчен пушара хирӗҫ кӗрешекен командӑсем нумай йӗркелеҫҫӗ, ҫав командӑсене пушара хирӗҫ кӗрешмели халӗхи вӑхӑтри ҫӗнӗ техникӑпа хӗҫпӑшаллантараҫҫӗ, вӗсем пушар сарӑлса кайассине хӑвӑрт чарма тата ҫийӗнчех сӳнтерме пултараҫҫӗ.

Йулашкинчен, сывлӑшран тапӑннинчен сыхланас ҫиҫтемӑра сывлӑшран тата химипе тапӑннӑ хыҫҫӑн ҫӗмӗрсе хӑварнисемпе кӗрешме, суранланнисене ҫийӗнчех медицинӑ пулӑшӑвӗ пама тунӑ командӑсем те пысӑк вырӑнта тӑраҫҫӗ.

Сывлӑшран тапӑннинчен сыхланас ӗҫӗн пӗтӗм ҫиҫтеминче ҫутӑлӑ маскировкӑ пӗчӗк вырӑна тӑрса йулма мар, тылри пӗтӗм йалсемпе хуласемшӗн обйазательнӑ тумалли ӗҫ пулса тӑрать.

Пирӗн ҫӗршывра, ҫыншӑн, питӗ хытӑ тӑрӑшакан, ӗҫҫыннисен вайӗпе питӗ пысӑк пуйанлӑх, материаллӑ хаклӑхсем тӑвакан ҫӗршывра—сывлӑшран тапӑннинчен сыхланас ыйту, ҫак ӗҫе тума кашни ҫын хатӗр тӑрасси пит те пысӑк вырӑнта тӑрать.

Совет Сойузӗ, сталинла икӗ пйатилеткӑна анӑҫлӑ тултарса, хӑватлӑ авиацилӗ державӑ пулса тӑчӗ. Совет ҫӗршывӗн Сывлӑшри-Ҫар флочӗ Хӗрлӗ Ҫарпа тата Тинӗс-Ҫар флочӗпе пӗрле кирлӗ вӑхӑтра тӑшмана ҫапса ҫӗмӗрме ҫеҫ мар, тӑшмансем пирӗн тӑван ҫӗршывӑн чиккисене пӑсма хӑйсан, вӗсен сывлӑшри флотне сывлӑшра та, ҫавӑн пекех вӗсен аэродромӗсенче те ҫапса аркатма пултарать. Пирӗн зенитлӑ артиллери ҫарӑ хӑватлӑ пайӗ пулса тӑрать, ӑна халӗхи вӑхӑтри артиллери техникин чи ҫӗнӗ материаллӑ пайӗсемпе тунӑ. Совет ҫыннисен паттӑрлӑхӗ, социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсене тарӑхни, вӗсене курайманни Совет Сойузӗ хӑйӗн территорийӗпе халӑхӑн мирлӗ ӗҫӗ ҫине никама та тапӑнма ирӗк парас ҫуккин шанчӑкӗ пулса тӑрать.

Полковник А. ҪЕГЕДИ.

1938 ÇУЛХИ ÇУРАКИ

Пĕр кун сиктермесĕр ирхи çĕртме сухине сухалама тытăнмала

С. И. Андрейĕв.

Чăваш йалхуçалăх институчĕн доценчĕ

Сăнавсем кăтартнă тăрăх, çĕртме сухине мĕн таран маларах тăватăн, тырăсене ÿсме кирлĕ сĕткенсем тăпра ăшĕнче çавăн чухлĕ нумай пулса тăраççĕ, кĕрхи тырăсем вăйлăрах пулаççĕ. Ырашпа кĕрхи тулă пуринчен лайăхрах хура çĕртме (черный пар) тунă вырăнта пулаççĕ, ирхи çĕртме çинче унтан кăшт начартарах пулаççĕ, кайа йулса çĕртме сухи тунă вырăнта пуринчен те начартарах пулаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ырашпа кĕрхи тула акмали вырăнсенче, пĕлтĕр хура çĕртме туса хăварман пулсан, пур çĕрте те ирхи çĕртме тумала.

Пирĕн республикăн виçĕ республика хушшинчи ăмарту договăрĕ тăрăх ирхи çĕртме сухине иййунĕн пĕрремĕшне çитиччен туса пĕтермеле. Калас пулаŤ, май уйăхĕнче çĕртме сухи тунă вырăнсенче те тыра пĕр пек пулмасŤ. Пĕр пек тăпра çинчех май уйăхĕнче маларах тунă ирхи çĕртме çинче çав уйăхрах кайа йулса сухаланă вырăнтинчен тыра вăйлăрах пулаŤ. Çавăнпа та кашни колхозăн, кашни МТСтанцин çуртрисене акса пĕтерсенех пĕр кун сиктермесĕр çĕртме сухи тума тытăнмала, вăл ĕçе кĕске вăхăтра пĕтерме тăрăшмала.

Çĕртме сухине малтанхи хут сухаланă чух 20—22 сантиметр тарăнĕш сухаламала. Унтан тарăн сухаласан та йураŤ. Тăпрасене шывпа йухтаракан тайлăм вырăнсенче çеç ăшăкрах сухалама пулаŤ. Сухаланă хыççăн сÿресех пырас пулаŤ. Хыççăнах сÿремесен, тăпра мăклашкисем хытса лараççĕ, вара кайарах йулса сÿренĕ чух ванмаççĕ.

Кĕллĕ (подзолистый) тăпра çинче çĕртмене пирвайхи хут сухаланă чухне кĕл сийне (подзолистый горизонт) пĕтĕмпех хăпартмала.

Çапла сухаланă чух тарăнĕшĕ 25 сантиметра йахăн пулма пултараŤ. Кĕллĕ тăпрасене çапла тарăнĕш сухаланинчен ним хăрамали те çук: Çавăн пек тăпрасене çапла тарăнĕш сухалама кирлине сăнавсем лайăх кăтартса параççĕ. Сăнавсем кăтартнă тăрăх, кĕллĕ тăпрасене 20—24 сантиметр тарăнĕш сухаланă вырăнсенче ăшăк сухаланă вырăнтинчен тыра 50 процента йахăн ытларах пулаŤ.

Кĕллĕ тăпрасене тарăн сухаланă чух хулăм кĕллĕ сий çаврăнса тухаŤ, çавăнта çĕртмене иккĕмĕш хут сухалас умĕн 25—30 тоннă (вăл сий пит хулăм пулсан ытларах та кирлĕ) тислĕк, йе çĕрĕк тăпри, йе торф, йе йушкăн тăкмала. (Йушкăн тăксан тыра тухăçĕ нумай ÿснине пирĕн республикăра чылай колхозсем кăтартса параççĕ). Çĕртмене иккĕмĕш хут сухаланă чух кĕллĕ сий çав йапаласемпе хутшăнаŤ те тăпра çĕнелсе çеç йулаŤ. Çав йапаласене тăкиччен малтан кĕллĕ тăпрана извĕçлесен тата лайăхрах пулаŤ.

Çĕртме уйне иккĕмĕш хут кĕрхи тырăсене акиччен 25—30 кун маларах сухаласа пĕтермеле, унчухне 15—17 сантиметр тарăнĕш сухаламала, сухаланă хыççăнах сÿресе пымала.

Çĕртме çинче çумкуракĕсем шăтса тухнăçемĕн лушчени туса пымала. Çĕртмене пирвайхи хут сухаланипе кĕрхи тырăсене акиччен лушчени 4—5 хутчен пулма пултараŤ. Лушчилник пулмасан ахаљ плугсемпе те вĕсен сурпанĕсене илсе пăрахса 6—7 сантиметр тарăнĕш сухалама йураŤ. Çĕртмене лушчени тусан тăпра ăшĕнче нÿрĕ те нумайтарах тытăнса тата çăмăр шыве те ытларах сăрхăнса йулаŤ.

Кĕрхи тыра акас умĕн çĕртмене куљтиваци тумала. Ахаљ плугпа куљтиваци тусан, 10—12 сантиметр тарăнĕш сухаламала, уйхыççăнах сÿресе пымала. Куљтиваци тунă хыççăнах çейăлкăпа акмала. Çĕртме çемçе пулсан, куљтиваци тумасăрах çейăлкăпа акмала.

Кĕрхи тыра çине клевĕр тата ытти куракĕсем акмала пулсан, кăçал çĕртме тунă чухнех извĕçлеме тăрăшмала. Кăçал тăпрасене торфотуфпа, извĕç йе доломит сăнăхĕпе, извĕçлĕ торфпа, извĕçлĕ хайăрпа, нумай извĕçлĕ мерчĕлсемпе извĕçлемеле. Ку извĕçлĕ йапаласене çĕртме тăвас умĕн уйа сапаламала, унтан сухаламала. Çĕртмене пирвайхи хут сухалас умĕн извĕçлеме ĕлкĕреймесен, çĕртмене иккĕмĕш хут сухаланă чухне те извĕçлеме йураŤ.

Извĕçлемели çĕр çине тислĕк, йе торф йе çĕрĕк тăпри тăкмалла пулсан, тăпрасене çĕртме сухине пирвайхи хут сухаланă чухне извĕçлеме тăрăшмала. Тислĕкне, çĕрĕк тăприне, йе торфне иккĕмĕш хут сухалас умĕн тăкмала. Пирвайхи хут сухаланă чухне тăпрасене извĕçлеме ĕлкĕреймесен, иккĕмĕш хут сухалас умĕн извĕçлĕ йапаласене малтан туртарса сапаламала, унтан тислĕк, йе торф йе çĕрĕк тăпри тăкмала. Торф чылайах извĕçлĕ пулсан, урăх извĕçлĕ йапала кирлĕ те мар.

Тăпрасене извĕçлемесен тислĕке, торфа тата çĕрĕк тăприне иккĕмĕш хут сухалас умĕн тăкмала. Нумай тăкмала чух ал çитеймест пулсан, пирвайхи хут сухалас умĕн тăксан та йураŤ.

Амони суљфачĕ, селитрă, кали тăварĕ, сиљвинит йатлă удобренисене çĕртмене иккĕмĕш хут сухалас умĕн тăксан аваŧтарах. Фосфорит çăнăхне пирвайхи хут сухалас умĕн тăкмала.

Йулашкинчен çĕртмесене лайăх сухалама кирли çинчен каламала пулаŤ.

Пĕлтĕр епĕ чылай трактăрисем çĕртме сухине йăран-йăранăн, ăшăк тата шайрăк хăварса сухаланине куртăм. Кăçалтан пуçласа çавăн пек сухалани пĕр вырăнта та пулмала мар. Колхозсен начар сухаланă вырăнсене пĕр хĕрхенмесĕр, хăрамасăр бракламала, начар сухалакан трактăристсем çинчен çĕрĕç пайне йе МТ Станцине пĕлтермеле.

Выставкăра пулма çирĕплетни колхозниксене хавасланттарчĕ

Турханти „Çĕнĕ хунав" колхоз (Ишлей р.) Иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илчĕ. Колхоза выставкăра пулма çирĕплетнĕ хыççăн, колхозниксем татах та пысăк хаваслăхпа ĕçлеме тытăнчĕç. Кăçал иртнĕ çулхинчен те вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе бригадăпа бригадă, звенопа звено, колхозникпе колхозник социалисăмла ăмăртăва тухса, çураки ĕçĕсене лайăх пахалăхпа вĕçлерĕç.

Йегорăв, Димитрийĕв сухаççем кашни куллен 2-шер гектар сухаласа пычĕç. Çавнашкалах Илйин колхозник 11 ретлĕ çейăлкăпа 8,5-шар гектар акса, нормăна ытлашшипех тултарса пычĕ.

Кунта агротехникăла ĕççене тĕрĕс пурнăçласа пычĕç. Хĕл вăхăтĕнче пухса хатĕрленĕ удопренисемпе çителĕклĕ таран усă кураççĕ. Кĕркунне акса хăварнă ыраш тата тулă калчисене тĕрлĕ имçамсемпе апат парса хăварчĕç.

Колхозниксем кăçал вăрлăхсене пурне те йаровизацилесе акнă. Суртлă мар вăрлăх кăшт та акман.

Колхозра пахалăх комиççи ĕçсене вăхăтра йышăнса пычĕ. Çавăнпа та кăçалхи çураки ăнăçлăн иртрĕ.

М. Алексейĕв.

Акана пысăк пахалăхпа иртернĕ

Ишекри (Ишлей р.) Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем пысăк тухăçлă тыра туса илессишĕн вăйлăн кĕрешеççĕ. Вĕсем Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн тăрашаççĕ.

Çуракине чаплăн иртерсе, вăйлă тырпул туса илес йенĕпе Сталин йачĕпе тăракан колхоз „Алинă" колхозпа ăмăртса ĕçлет. Ишек колхозникĕсем кăçал вăтам хисеппе кашни гектартан 18 центнĕр тĕштыра туса илессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Агротехникăла ĕççене вăхăтра, тĕрĕс пурнăçласа пыраççĕ.

Кăçалхи çуракинче Ишек колхозĕ 366 гектар тĕштырă, 82 гектар ытларах клевĕр акса хăварнă. Хĕл вăхăтĕнче хатĕрленĕ удобернисемпе пĕтĕмпех усă курнă. Вăрлăхсене пĕтĕмпех вутпуççирен тасатса, йаровизаци туса акнă. Агрономсем калана тăрăх, çуракине пысăк пахалăхпа иртернĕ.

Кĕрхи калчасене тислĕк шĕвекĕпе апат панă. Хаљ колхозниксем пахча-çимĕççем лартнă çĕрте ĕçлеççĕ.

Н. Кудрйавцĕв.

А. Наумăв.

„Социалисăм" колхоз малтан акса пĕтерчĕ

ВАРМАР. Майăн 8-мĕшне Текешри „Бољшевик", Çĕнĕ Вĕренерти, Çĕн Шулханти, Ентрипасарти „Социалисăм", тата Сталин йачĕпе тăракан колхозсем тĕштырăсене акса пĕтерчĕç.

Районри колхозсенчен „Социалисăм" колхоз çураки ĕçĕпе малти ĕретре пыраŤ. Çак колхоз тĕштырăсене ытти колхозсенчен чи малтан акса пĕтерчĕ. „Социалисăм" колхозра Кашни йертсе пыракан бригадă çуракинче мала тухрĕ.

Кайала колхоз членне илнĕ

Аслă Чакри (Вăрмар р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозра ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Парти Тĕпкомĕ апрелĕн 19-мĕшĕнче „Колхозниксене колхозран кăларма чарасси çинчен", „Колхозсенче тупăшсене тĕрĕс мар валеçни çинчен" тата „Иединоличниксен хуçалăхĕсем çине хунă налогсемпе ытти обйазатĕлствăсем çинчен" йышăннă постановленисене сÿтсе-йавнă.

Аслă Чакри колхозра колхозниксене колхозран тĕрĕс мар кăларнисем, укçан тивекен тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçмесĕр урăх расхута йана теслĕхсем пулнă. Халĕ çав йăнăшсене тÿрлетме тытăннă. Колхозран тĕрĕс мар кăларнă пĕр хуçалăха колхоза кайала илнĕ.

В. Андрийанăв.

Йăнăшсене тÿрлетме тытăннă

Кайри Ăнтавăшри (Шăхасан р.) К. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсем хушшинче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Парти Тĕпкомĕ „Колхозниксене колхозран кăларма чарасси çинчен" йышăннă постановленине тĕплĕн сÿтсе-йаврĕç. Постановленире кăтартнисем Кайри Ăнтавăш колхозне те пĕтĕмпех пырса тивеççĕ. Иртнĕ çулсенче колхоз правленинче ĕçлекенсем колхозра тÿрĕ ĕçлекен колхозниксенех колхозран кăларма пăхнă. Федăрăв, колхоз председателĕ пулнăскер, Д. Çеменăв колхознике коњухран тухнă тесе, колхозниксен пухăвĕнче ыйту лартса колхозран кăларттарнă. Çавăн пекех тата Й. Çеменăв колхознике пахча-çимĕç ĕçне тума тытăнман, тесе колхозран кăларнă пулнă. Çапла вăл 4 уйăх хушши колхоз ĕçне хутшăнма пултарайман. Халĕ ăна кайала колхоза илнĕ.

Колхоз правленин кăçал мартăн 3-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче А. Çеменăв колхозник лашапа çÿренĕ чухне хытă чуптараŤ тенĕ сăлтавпа, ăна 5 ĕçкунĕпе штрафланă тата коњухран кăларас тесе йышăннă.

Колхоз правленийĕ тунă йăнăшсене тÿрлетес ĕçе чăннипех тытăнман-ха. Ку ĕçе вăраха йарса пымала мар. Йăнăшсене халех тÿрлетес пулаŤ.

И. Çтепанăв.

Коммуналлă çуртйĕр строителĕстви

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн Х-мĕш çеççийĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ хамăр республикăн халăх хуçалăхĕн пур отраçлисене те тата куљтура строителĕствине анлăн сарса йама май параŤ. Халăх хуçалăх планне ĕççынниcен пурнăçне малала лайăхлатса пымала, халăх массисен кирлĕ ыйтăвĕсене лайăхрах çураçтармала тунă.

Кăçал республикри Коммуналлă çуртйĕр Халăх Комиссариачĕ йенĕпе çуртйĕр хуçалăхне лайăхлатма тата çĕнĕ строителĕствăсем тума 7729,2 пин тенкĕ укçа уйарнă. Вăл шутран Шупашкарта 62 хватерлĕх 3 пурăнмали çурт тумала, Карл Маркс йачĕпе тăракан урамма пĕтĕмĕшпех асфаљт сармала, електростанцийе туса пĕтермеле. Шупашкарта правителĕствă çурчĕ пулаŤ, ăна тума 915 пин тенкĕ, водопровод тума 600 пин тенкĕ тата ытти тĕрлĕрен строителĕствă çине 513 пин тенкĕ, пурăнмали çуртйĕрсене йусама 240 пин тенкĕ укçа каймала.

Ытти хуласенчен уйрăмăнах Улатăрпа Канашра пысăк ĕççем тумала. Улатăрта—мунча тата водопровод, Канашра—мунча туса пĕтерсе ĕçе йамала. Ытти районсенче те строителĕствă ĕçĕ ытти çулхисенчен нумайтарах пулмала. Район центăрĕсене йĕркелеме 785 пин тенкĕ уйарнă.

Анчах пайанхи куна çак ĕççем мĕнле пыраççĕ-ха? Калас пулаŤ, питех те çителĕксĕр. 1-мĕш квартăл планне коммуналлă строителĕствă йенĕпе—27,2 процент, пурăнмали çуртйĕр тăвассипе—77,8 процент тата, администрацилĕ строителĕствă йенĕпе—55,5 процент çеç пурнăçланă.

Çакă ĕнтĕ вăл строителĕствă организацисем васкамасăр, хăйсен йухăмĕпе ĕçлесе пынине кăтартса параŤ.

Строителĕствă ĕçĕ ăнăçлăн, хăвăрт пулса пырасси уйрăмăнах строителĕствă материалĕсемпе оборудованисене çителĕклĕ хатĕрленинчен килет. Анчах çак ĕççем пайанхи куна кирлĕ пек пурнăçланса пымаççĕ-ха. Цемент, тимĕр, кирпĕч, йăвăç т. ыт. материалсем çитмеççĕ, вĕсене малтанах хатĕрлесе хуман.

Ытти çулсенче договăр тăвас кампанийе тăсса пынă, ку кăçалхи çул та практикăра куранаŤ. Çакна анланма вăхăт ĕнтĕ: строителĕствăра ĕçлеме договăр тăвасси мĕн таран тăсăлса пыраŤ, çавăн чухлĕ вăл ĕç малала кайасси чарăнса тăраŤ.

Кăçалхи çул иртнĕ çулхипе танлаштарсан производствă программи икĕ хут ÿснĕ. Çак ĕнтĕ строителĕствă организацисене пысăк тухăçлăхпа, иртнĕ çулхинчен темиçе хут лайăхрах ĕçлеме хушаŤ.

Волкăв.

Вăрмансене тасатас ĕç начар пыраŤ

ЙĔПРЕÇ. Кашни çуркуннех вăрмансене выртан-тăран йăвăççенчен тасатмала. Çак ĕçе туни вăрмана сийенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен тата вут-кăвартан сыхлас çĕрте пит те пысăк пулăшу параŤ. Анчах ку ĕçе Йĕпреç районĕнчи вăрман пункчĕсем çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ.

Кăçал Йĕпреç вăрманпромхозĕн 1300 гектар çинчи вăрмана тасатмала. Ку вăрмана вăхăтра тасатса çитерес тесен, кашни кунах вăрманта 750 çын çуран, 100 çынна йахăн лашапа ĕçлемелле. Пайанхи куна колхозсемпе йалсоветсем çителĕклĕ ĕç вăйĕ паманнипе план пурнăçланса пыраймасŤ. Апрел уйăхĕнче вăрманта пĕтĕмпе те 14 çын ĕçленĕ.

Йалсоветсемпе колхозсем çынсене вăрмана питĕ те сахал йараççĕ. Акă, сăмахран, Чернореченски вăрман пункчĕ çумне çирĕплетнĕ 6 йалсоветран 4 йалсовечĕ вăрман тасатас çĕре пĕр çын та йаман.

Первомайски вăрман пунктĕнче ĕç аванрах пыраŤ. Ку вăрман пунктне кĕрекен 7 йалсоветран Чăрăшкассипе Чăваш Тимĕш йалсовечĕсем кăна ĕçлемеççĕ.

Вăрман тасатнă çĕрте ĕçлекенсене тÿлеме тĕрĕс ĕç хакĕ çукки те чылай чăрмантараŤ. Сăмахран, хаљхи вăхăтра ретрĕнех каснă йăвăççене пĕр гектар тасатма 21 тенкĕ тÿлеççĕ, çав вăхăтрах тепĕр çĕрте 28 тенкĕ тÿлеççĕ. Ку хакпала рабочисем килĕшмеççĕ. Ĕç хакĕ пирки Чăвашвăрман охранинчен темиçе хутчен ыйтнă пулин те тĕплĕ ĕç хакĕ туса паман.

Вăрман тасатассине васкавлăн пурнăçа кĕртесси вăрманпромхоз руководителĕсем çине пысăк ответлăх хураŤ. Йĕпреççем пайанхи куна çав ответлăха туйса илмен-ха.

Г. Марушĕв.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿсет

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-саран савачĕ апрел уйăхĕнче ытти уйăхсенчен лайăх ĕçлерĕ. Саваŧ уйăх планне 105 процент тултарса ĕç тухăçлăхне 131 процент хăпартнă. Бригадăсем пурте хăйсен планĕсене тултарнă. Çĕлекен цехри чувйак тăвакан бригадă çеç (бригадирĕ Кириллăв) уйăх планне тултараймарĕ.

Ĕç тухăçлăхне хăпартассипе уйрăмăнах тир-саран цехĕ малта пыраŤ. Вăл апрел уйăхĕнче ĕç тухăçлăхне 138,5 процент ÿстерчĕ.

Малта пыракан Пелаги Скачковă йулташ бригади апрел уйăхĕнче те паха теслĕхсем кăтартрĕ. Унăн бригади ĕç тухăçлăхне 142,6 процент ÿстерчĕ.

Уйрăмăнах Калентйĕв (Ленин йачĕпе тăракан бригадă), Павлăв (Кирăв йачĕпе тăракан бригадă) стахановĕçсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем пурте уйăхри плана 220 процент ытла тултарнă.

И. Федăрăв.

Тĕрĕ ертелĕнчи стахановкăсем

Тоскинейĕври (Шупашкар р.) тĕрĕ ертел членĕсем пурте пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашнийех вĕсем лайăх, капăр тата хисепĕ йенчен нумай тĕрĕ туса кăларассишĕн тăрăшаççĕ.

Стахановкă Нина Васийлĕвă йулташ 1-мĕш квартăл планне 189 процент тултарчĕ, вăл 800 тенкĕлĕх тĕрĕ тăвас вырăнне 1516 тенкĕлĕх тунă. Çмирновă йулташ квартăл планне 174 процент, Федăравă—154 процент тултарчĕç.

Хаљхи вăхăтра вĕсен хушшинчи ăмарту саралсах пыраŤ. Вĕсем иккĕмĕш квартăл планне татах та ытларах тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Михайлăв.

М. Н. Данилăв—Чалдун

Суд умĕнче

(НОВЕЛЛĂ)

Пирĕн çĕршывпа йунашар государствăсенчен пĕринче çамрăк хĕрарăма суд тăвасси çинчен хаçатсем ик-виçĕ кун малтан çырса пĕлтернĕ.

Суд пулас кун ирех халăх пуçтарăнма пуçланă. Вĕсен ачине çырмана пăрахнă хĕрарăма курас килнĕ.

Вунă сехет çурă çитнĕ çĕре судйесем пынă. Вĕсенчен иккĕшĕ ватам çулхи çынсем, виççĕмĕшĕ ватă, шурă сухаллă, кукша пуçлă пулнă. Вĕсем виççĕшĕ те кăвак пуставпа витнĕ сĕтел хушшине кĕрсе ларнă.

Тепĕр минутран, аллине хĕç тытнă полицейски хĕрарăма илсе пынă.

Лар çак тенкел çине, — тесе пÿрнипе тĕллесе кăтартнă вăл хĕрарăма.

Хĕрарăм хура сăрпа сăрланă тенкел çине ларнă. Унăн йуç хупаххисем—те вăрăх сывăрманнине, те нумай йĕнипе—кăшт тăртаннă. Куç айĕсем кăн-кăвак куранна, тап-тап çÿхе тутисене пĕр-пĕрин çумне сыпăçтарса тытнă, сарă çÿçĕн пĕр пайăрки кивĕрех тутăрĕ айĕнчен куранса тăнă. Вăл пĕрре судйесем çине, унтан суд итлеме пынă çынсем çине пăхса çаврăннă та, кăпăк пек шурă ÿтлĕ аллисене кăкăрĕ çине хĕреслетсе хурса, тарăнăн сывланă. Унтан те вăтаннипе, те хуйхăпа пуçне çĕреле чикнĕ. Шухăша кайнă.

— Ах, йепле вăл çамрăк та илемлĕ хĕрарăм, — тесе пăшăлтатнă суд итлеме пыракансем хушшинче.

Пĕр вăхăта суд залĕ шăпланса çитнĕ. Суд итлеме пыракансен куçĕсем пурин те суд умĕнчи хĕрарăм çинче пулнă: „Мĕншĕн-ха çав тери илемлĕ хĕрарăма суд туса айăпласа тĕрмене хупмала?"— тесе шухăшланă хăшĕсем.

Хĕрарăм ниçта хускалмасăр, суд пуçланасса кĕтсе, йăвашшăн пăхса ларнă. Тăртаннă куçхупаххисем пĕр хупăннă, пĕр уçăлнă. Вăл хăйĕн айăпне суд умĕнче пĕртте пытарма шутламан. Мĕнле пулнă çапла, чăннипе каласа пама хатĕр тăнă.

Суд пуçланнă.

Айăплă хĕрарăм, есĕр мĕн йатлă? — тесе ыйтнă кукша пуçлă судйе.

Хĕрарăм хăйĕн йатне каланă. Вăл Еллă йатлă пулнă.

— Миçе çулта?

— Вунтăххăрта.

Суд итлекенсем шартах сикнĕ:

— Хăй те çамрăк. Тата ача çуратса кайса пăрахма та ĕлкĕрнĕ, — шăппăн пăшăлтатса каланă.

— Ăçта ĕçлесе, мĕнпе хырăм тăрантса пурăнатăн? — тесе ыйтнă судйе.

— Прислугăра, — кĕскен ответленĕ Еллă.

— Есĕр хăвăра айăплă, тесе шутлатăр-и?

— Айăплă.

— Мĕншĕн есĕр вăл ачана çырмана кайса пăрахрăр? — ыйту панă судйе.

Еллă ку ыйтăва хирĕç труках ответ парайман. Пĕр минут пек шухăша кайса тăнă. Унтан хуллен калама пуçланă.

— Вăхăт çитсен епĕ ачана çуратма пуљницăна кайрăм. Манпа пĕрле тепĕр хĕрарăма выртарчĕç. Вăл хĕрарăм ывăл ача çуратрĕ, епĕ хĕр. Ачине çуратсан тепĕр кунне унăн сывлăхне пĕлме упăшки пырса кайрĕ. Епĕ тăлăх, пĕр пĕччен, манăн аттем те аннем те, упăшкам та çук, кунта ман сывлăха пĕлме никам та килмест. Епĕ никама та кирлĕ мар. Манăн никам та çук. Епĕ вăл каччӑпа иртнĕ çуркунне паллашрăм. Вăл ун чухне ĕççĕр çÿретчĕ. Епĕ ĕçлетĕп, прислугăра пурăнатăп. Çавăнпа епĕ ăна, вăл ĕç тупса ĕçлеме пуçличчен, тăрантма пултăм. Вара пĕрне-пĕри йуратрăмăр. Тен халĕ те пĕрле пурăннă пулатăмăр-и... Анчах.

— Халĕ ăçта çÿрет вăл каччӑ? Мĕншĕн сана пăрахрĕ? — тесе пÿлсе ыйтнă судйе.

Еллă пĕр ури çинчен тепĕр ури çине пусна:

— Çук, вăл мана пăрахман. Вăл хăй ирĕкĕпе Испанине республиканĕçсемпе пĕрле, фашиссене хирĕç тăрса çапăçма кайрĕ. Епĕ унран йăвăр çын пулса йултăм.

— Есĕ вăл каччӑпа паллашнине куракан свидетĕлсем пур-и? — каллех пÿлсе ыйтнă судйе.

— Свидетĕл?.. Вăл кăçхине çанталлăк уйар та лăпкăччĕ. Епĕр унпа пĕрлешсе уйăрăлнине тÿпери çăлтăрсем çеç курнă. Урăх никам та...

Суда итлеме пынă çынсем хăшĕ ăнланă, хăшĕ ăнланайман та, çавăнпа:

— Мĕн? мĕн каларĕ вăл? — тесе пĕр пĕринчен ыйтнă.

— Çапах та, мĕншĕн-ха есĕ вăл ачана çырмана кайса пăрахрăн? — тесе тĕпченĕ судйесем.

Еллă сăмахне малала каланă:

— Хампа пĕрле ача çуратнă хĕрарăма, епĕ хам пурнăç çинчен каласа патăм, вăл мана çапла каларĕ:

„Епĕ сан пек ача çуратас пулсан, ăна пăхса ÿстерме мар, кăкăрăма та хыптарса пăхассăм çук. Ан тив, выçах вилтĕр. Халĕ ак есĕ ĕçлесе хырăмна тăрантарса пурăнатăн. Ачуна йатса тавăрăнсанах сана хуçа арăмĕ хуçа кăларса йараŤ. Вăра ăçта кĕрсе кайăн! Ăçта ĕçлесе хырăмна тăрантарăн? Сана, ачалă çынна, кам ĕçе йышăнĕ? Ачалă хĕрарăм мар, ав арçынсем те пиншерĕн-пиншерĕн тахçантанпа ĕççĕр аптăраса çÿреççĕ", терĕ.

Епĕ шухăша кайрăм: „Чăнах та вĕт. Епĕ ачапа тавăрăнсан мана хуçа арăмĕ усрас çук. Кама кирлĕ епĕ, ачалă хĕрарăм? Мĕн тăвас? Ăçта хурас ку ачана?" Çĕрĕ çĕрĕпе сывăраймастăп. Чĕре вутла çунаŤ. Ниçта ларса тăма вырăн çук.

Ак, пуљницăран тухма вăхăт çитрĕ. Пирĕн ачасене кипкесемпе чĕркесе илсе пычĕç.

— Сыва пулăр! Ачăрсене лайăх пăхса ÿстерĕр. Телейлĕ пулччăр, — тесе ăсатса йачĕ сестра.

Пуљницăран тухрăмăр. Вăл хĕрарăма упăшки лашапа пырса илсе кайрĕ. Епĕ ачана йатса çырма хĕрнеле утрăм.

Çырма шывĕ кĕмĕл пек тăрă, çыран тулли йухаŤ. Епĕ ун çине чылай вăхăт пăхса тăтăм: „Мĕн тăвас?" Ачана йулашки хут кăкăра ĕмĕртрĕм. Унтан ăна кипкипе лайăх чĕркесе çырма хĕррине пăрахса хăвартăм. Вара, куç ан куртăр тесе, пĕр çаврăнса пăхмасăр утрăм. Тавăрăнсан хуçа арăмĕ хирĕç пулчĕ:

— Ачу ăçта? — тесе ыйтрĕ.

— Ача вилĕ çуралчĕ, — тесе суйрăм.

— Аван пулнă. Ачупа килнĕ пулсан та епĕ сана пурпĕр хуçа кăларса йараттăм. Ме, ил расчут. Есĕ мана урăх кирлĕ мар, — тесе икĕ маркă укçа пачĕ мана хуçа арăмĕ.

Епĕ ăнтан кайнипе йупа пек хытса кайрăм. Вырăнтан хускалма пĕлмесĕр тăратăп.

— Мĕн пăхса тăратăн тата? Тухса кай! — тесе кăшкăрчĕ хуçа арăмĕ.

Хамăн мĕн пур пек йапаласене пуçтартăм та, алăкран тухма тăтăм, мана хирĕç хăй хампа пĕрле ача çуратнă хĕрарăм ачине йатса пырса кĕчĕ те:

— Ах, буљницăри сестра йанăшпа пирĕн ачасене улăштарса парса йанă, санăн хĕрне мана панă, ман ывăла сана тыттарнă. Ме хăвăн хĕрне, пар манăн ывăла, — терĕ ачине ман йенеле чăсса.

— Манăн ача çук. Епĕ ăна çырма хĕрне пăрахса хăвартăм, — тесе пĕлтертĕм.

Шыв хĕрне анса шыраръç. Çук, тупаймарĕç. Унтан çак ĕç çинчен пуљницăна пĕлтерчĕç. Çав кун мана тытса тĕрмене хупрĕç. Пайан акă епĕ суд умĕнче. Мĕн тăвас тетĕр çавна тăвăр, сирĕн ирĕк, — тесе пĕтернĕ Еллă хăйĕн йулашки сăмахне. Кăвак куçĕсенчен куççуљ тумламĕсем пăчăртатса тухса, пăнулми пек чăмăр питçăмартийĕсем тăрăх йухса аннă.

— Мĕскĕн хĕрарăм, — тенĕ сасă илтĕннĕ суда итлеме пыракансен хушшинчен.

Сасартăк пĕр кăвакара пуçланă çÿçлĕ хĕрарăм ура çине сиксе тăнă та:

— Судйесем, есĕр вăл хĕрарăма ан айăплăр-ха. Епĕ халех, — тенĕ чĕтрекен сассипе. Унтан тулала васкаса тухса кайнă. Суда итлеме пынă çынсем хĕрарăм çине тĕлĕнсе пăхса йулнă:

— Мĕнле майпа пулăшасшăн-ха вăл? — тесе пăшăлтатнă.

Еллă куççуљне йĕпеннĕ куçĕсене алтутрипе шăлса типĕтнĕ те, хăй вырăнне ларнă. Полицейски ун çинчен куçне илмесĕр пăхса тăнă.

Судйесем айăплакан пригăвăр çырма урăх пÿлĕмеле тухнă.

Нумай та вăхăт иртмен, хăй кăвакара пуçланă çÿçлĕ хĕрарăм аллине ача йатса пырса кĕнĕ:

— Ан хуйхăр хĕрĕм, ме ачуна. Епĕ ăна çырма хĕрне шык ăсма ансан тупса тавăрăнтăм та, пăхса усрарăм, — тенĕ хĕрарăм.

Ачана курсан Еллăн тутисем йăл кулнă. Ачине ыталаса тытнă. Ачи:

— У-а-а у-а-а! — сасă панă...

— Тавтапуç сана инке. Есĕ мана та тĕрмерен çăлтăн, ачана та вилĕмрен хăтартăн! тесе пĕтĕм чунĕнчен тавтунă хĕрарăма Еллă.

Çав вăхăтра судйесем айăплакан пригăвăр çырса тухнă.

— Ачи тупăнчĕ, амăшне ан айăплăр! — тесе кăшкăрнă суда итлеме пынă çынсем.

Кукша пуçлă судйе халăх сăмахне итлемен, пригăвăрне вуланă.

— Епĕр ăна ачашăн мар, фашиссене хирĕç тăнăшăн айăплатпăр, — тесе ответленĕ судйе.

Суд хупăннă. Халăх саланнă. Еллăна каллех тĕрмене илсе кайнă. Халĕ ĕнтĕ вăл пĕччен мар, ачипе ларнă. Ун çумĕнче фашисăма хирĕç кĕрешекен наттăрсенчен пĕри ÿсĕхсе ÿсĕ.

КАФЕТЕРИЙ

Алăк умне çырса çапни калать: „Кафетерий“.

Есĕр алăка уçатăр та аслă, таса, çутă илемлĕ зала кĕретĕр.

Кĕрсенех сире кассăран талон парассĕ. Есĕр унпа сĕтелсем патне мар кайатăр. Унта хăлхе нимĕн те тума çук. Есĕр вăрăм прилавăк патне, поднос çине вилкăсем, çĕçĕсем, кашăксем, хутран тунă салфеткăсем хума май пур çĕре кайатăр. Çавсене пурне те есĕр хăвăр тăватăр.

Унтан, есĕр прилавăк тăрăх малалла кайатăр та унăн тĕрлĕ пайĕсенче хăвăра кирлĕ çимĕçсем суйласа илетĕр: йашкарай пусласа йашалана какай патне çитийех, пахча-çимĕçсенчен тата пуларан пĕçернĕ тĕрлĕ çимĕçсем, олатйисем, икерчĕсем, макаронсем, пончиксем.

Çаксене пурне те çавăнтах, прилавăк çинчех, есĕр ыйтнипе йатарласа тунă аппаратсемпе ăшăтса тата хатĕрлесе те парассĕ.

Тĕлĕрен сивĕтнĕ çимĕçсем те илме пулать: студĕн, салат, çупа пĕçернĕ пулă т. ыт. те, çавăн пекех усăлтаракан пывсем те.

Вăхăта питĕ те сахал иртерсех, черетре тăмасăрах, есĕр хăвăра мĕн кирлине пĕтĕмпех илетĕр.

Прилавăк работникĕсем усăсăр чупкаласа çÿрессинчен хăтăлассĕ. Вĕсен пĕтĕм ĕçĕ те аппаратсем ĕçне йĕркелесе пырасенче кăна тăрать. Вĕсене прилавăк çинчи пушанкан вырăнсем хăвăртрах çĕнĕ продукцине тултарса кăна асăрхама лекет.

Çапла майпа çимĕçсене тата буфетчикран кайăла талон илсе, есĕр сĕтел йышăнатăр та çиме ларатăр. Талон çине есĕр илнĕ çимĕçсен хакне çырса парассĕ.

Кафетеринчен тухнă чухне есĕр кассăна талон паратăр тата кирлĕ чухлĕ укçа тÿлетĕр.

Çиме пыракан хăйĕнчен хăйех тăрăшни—кафетерин тĕп уйрамлăхĕ.

Кафетерине кайнă чух потребителĕ шанăсах тăма пултарать: вăл хăй мĕн илес тенине пурне те, çав вăхăтрах тата чи лайăх пахалăхлине илме пултарать.

Кафетерийĕ ĕçлекен хăвăртлăх тата унăн продукцийĕн пысăк пахалăхĕ пуринчен малтан вăл техникăпа туллин усă курнинчен килет.

Пулăшакан цехсене, суту илÿ залĕ çинчен калама та кирлĕ мар, пĕтĕмĕшпех механизациленĕ. Çакăра та потребителĕ умĕнчех йатарласа тунă машинă касса парать.

Пĕрле апатланассинчи çак çĕнĕ предприйатин уйрамлăхĕсем çакăн пек.

Пĕрремĕш кафетерисем Мускавра кăçалхи май уйăхĕнче уçăласçĕ. 1938 çулта ССР Союзĕнче 100 ытла кафетерисем туса лартассĕ. Çывăх вăхăтсенчех кафетерисем Ленинградра, Кийĕвра, Свердловскра, Донбасра, Горькинче, Магнитогорскра тата урăх çĕрте те пуласçĕ.

(ТАСС).

Кино-картинăсем кăтартас ĕçе йĕркелемеле

Халăх хушшинче културăлă-массăлла ĕçе туса пырас çĕрте, халăхăн културăлă ÿсĕмне турнасас çĕрте кино пысăк вырăн йышăнса тăрать. В. И. Ленин кинона пысăк хак панине пурте пĕлетĕр.

Анчах „Чăвашкинотрест“ работникĕсем кино кăтартас ĕçе хаклама ăсса пулас. Вĕсем районри кино-базăсене ĕçре пулăшу памассĕ.

Шăхасанти кино-базăра заведующийĕ те, механиксем те, счетовод та, кинопаратсем те пур. Анчах... ĕçĕ сахал. Районри ĕçхалăхне кино-картинăсем кăтартассине йĕркелесе çитермен.

Механиксем кино-картинăсене ытла та йапăх кăтартассĕ. Часах лентăсем татăлассĕ, лампăчкăсем сунса кайассĕ. Акă, апрелĕн 10-мĕшĕнче Шăхасанта „Петр Первый“ каласакан картинăна 5 пай кăтартсан, усилитĕл пăсăлнă пирки, ытти пайĕсене кăтартса пĕтермесĕрех халăха салатса йанă. Апрелĕн 25-мĕшĕнче те „За советскую родину“ картинăн 5 пайне кăтартсан лампăчкăсем сунса кайнипе, ытти пайĕсене кăтартайман.

План тăрăх кино-базăн йалсенче висĕ кинопередвижкă пулмала. Кашнине 20 кино-точкă тивет. Пайанхи купа кинопередвижкă валлиĕн 1 механик çук. Вăл йĕр маршрутпа çÿрет. Çапла вара районри ытти 40 йалсенче кино пачах пулмасть.

Шăхасанти каласакан кино-аппарат кинĕ, ирĕнĕ çултах пăсăлнă. Çак çулти йанвар тата феврал уйăхĕсенче тата мартăн малтанхи çурринчен ĕçлемесĕр ларнă. Ăна йусаттарса та пăхрĕç. Кашт ĕçлесен калăх пăсăлчĕ. Мартпа апрел уйăхĕсенче 15 кун хушши усилитĕл пăсăлнипе кино кăтартаймарĕç. Çапла вара мартăн 13-мĕшĕнчен апрелĕн 24-мĕшне „Чăвашкинотрест“ планĕ тăрăх 15 картинă кăтартмала пулнă пулсан, 9 çеç кăтартнă.

С. Соколов.

Çĕнĕ операсем, балетсем, çимфонисем

ЛЕНИНГРАД. (Хамăр корр.) Кунта халь А. С. Пушкинăн „Кавказкий пленник“ йатлă поеми тăрăх йĕркеленĕ балета кĕçĕн опера театрĕнче кăтартма пуçларĕç. Балет валли музăкне композитăр орденоносеç П. В. Асафйĕв çырнă, либреттине Волкăв, Зилберштейн, Лавросский çырнă.

В. Волошинăв композитăр Виктăр Гусĕвăн „Слава“ йатлă пйеси тăрăх опера çырса хатĕрленĕ. Ана Кирăв йачĕпе тăракан оперăпа балет театрĕнче лартма хатĕрлейессĕ.

О. С. Чишко композитăр („Броненоезд Потемкин“ йатлă оперă автăрĕ („Песня о счастье“ йатлă çĕнĕ оперă çырать. Ку оперă Украинăри пйатисотницă-колхозницăсем çинчен пулать. Либреттă—Спаскийĕн.

Т. Хренников композитăр Н. Вирта писателĕн „Одиночество“ романĕ тăрăх „В бурю“ йатлă оперă хатĕрленĕ. Либреттине А. Файк çырнă.

Çамрăк композитăр Желобинский Максим Горькин „Амăшĕ“ повĕçĕ тăрăх оперă çырнă. Кăçал ăна сценă çинче кăтартма пуçласçĕ.

Д. Шостакович композитăр нумайах пулмасть хăйĕн 5-мĕш çимфонине çырса пĕтерне. Халĕ 6-мĕш симфонине çырма хатĕрленет. Унăн темине Майаковскин „В. И. Ленин“ поеминчен илнĕ.

А. Михайлăв.

Лайăх ĕçлекен леçник

Сурăм вăрманĕнчи 11, 12, 13, 14-мĕш кварталсене хурал тăракан леçник И. Феодăрăв йулташ вăрмана лайăх пăхнăшăн 7 хут премии илнĕ.

Кăçал та Феодăрăв йулташ вăрмана сийенлекен хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешес ĕçе лайăх туса пырать. Майăн 3-мĕшнех вăл вăрманти сийенлĕ хурт-кăпшанкăсене (йăвăç çинчине) 214 килограм пуçтарнă.

Çак май уйăхĕнче вăл пĕлтĕр каснă вырăна (2 квартăл çинче) пĕтĕмпех йĕкел лартса хăварма обйазательствă илнĕ. Халĕ ăна айăçлăнах нурийçа кĕртсе ырать.

Г. Колцов.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Йапони агрессăрĕсем персе амантнă тата суртĕнсĕр тăратса хăварнă мирлĕ пурăнакан китайĕцсем.

(Союзфото).

ПĔЧĔК ФЕЛЙЕТОН

ВĂЙĂ-КУЛĂЛА ВĂЙĂ

Сирĕн, калăпăр, чăваш чĕлхи грамматикине вĕренес килет. Апла-тăк, чĕелленине нимĕн те ситмест. Тÿрех вырăсларан чăвашла куçарнă географи кĕнекине ыйтса çырăр, вара çак грамматикă кĕнекинĕх сирĕн пата пырса вырать.

Тепĕрне йестествознани кĕнеки кирлĕ. Ватанса ан тăрăр: тÿрех кĕнеке куçарма ыйтнă перевод çине: „Çĕрудми ларса ÿстерессе çинчен çырнă кĕнеке парăр“— тесе çырса хурăр.

Епĕр, Шупашкарти „Книга—почтой“ хальхи пекех ĕçленĕ чухне, урăхла ăс пама пултараймастпăр,

Вагайски районĕнчи (Омск облăçĕ) Канашри пуçламĕш шкул, 1937—38 çулхи вĕренÿ çулне хатĕрленнĕ май, Шупашкарти „Книга-почтăна“ пуçламĕш шкулта вĕренмели кĕнекесем ыйтса заказ йанă.

— Вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитетпĕр. Учебниксем те часах килессĕ,— тенĕ вара шкулти учителсем.

Тĕлĕнмеле резултат! Учебниксем килнĕ. Ултă посылкă тÿлесе илмеле. Уçса пăхассĕ... хут пĕлменнисемпе хут сахал пĕлекенсене вĕрентмели кĕнеке. Посылкинче тата кĕнекисем çителĕксĕр. 67 тенкĕлĕх çитмест.

Ун çинчен акт çырнă. „Книга—почтăра“, йанăша тÿрлетес вырăнне... çухатнă.

Çак шкулах йанвар уйăхĕнче Шестаков професcăр редакциленĕ „ССР Союзĕн историйĕн кĕске курсĕ“ кĕнекине, чăвашла куçарнине, ыйтса, 24 тенкĕ укçа куçарса панă. Кĕнеке çук. Укçине те кайăла йамассĕ. Ыйтассĕ: хирĕç нимĕнле ответ та пымасть.

Тепĕр чухне çапла та тăвассĕ.

— Укçине тÿлĕр. Çапла-çапла кĕнеке йарса парăпăр.

Çавăн пек иртнĕ çул Шупашкарти Когиз магазинĕ „Килти вăтам шкул“ валли темĕн чухлĕ подписчиксем пухрĕ. Аха! Кăçăрăр. Ес заочник мар. Сана апрелĕн 30-мĕшĕнчен вăл укçана поч. тă урлă куçарса пама пулчĕç. Кĕтессĕ. Анчах укçине куçаричен тепĕр апрел те çите-ха.

Çакăн пек мыскарасене тата „Союзпичет“ нумай тума йуратать.

— Çыранăр, — тет, — хаçатсем, журналсем...

Илсе тăратăн-и ăна ес, вăл уп ĕçĕ мар иккен,—пĕлмест.

Иртнĕ çулхи декабĕр уйăхĕнче Шупашкарта ĕçлекен В. Васильйĕв тăван килне, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кивĕ Акчура йалне, М. В. Никитин йачĕпе çулталăклăх „Чăваш Коммунĕ“ хаçат çыран-са йарать. Йанвар уйăхĕнче пыман вăл. Феврал уйăхĕнче йамала тунă. Феврал уйăхĕнче те çук. Унтан вара, март уйăхĕнче йаратпăр, тенĕ. Халĕ май уйăхĕ. Никитин çаплах пĕр екземплйар та илеймест. Квитанци тулли резолюци:

— Высылку газет начать с первого числа...

Пирĕн халăх нумайран нумай вулама тăрăшать. Анчах, çавăн пек, „Союзпичет“ тата „Книга—почтой“ пек, подписчиксенчен куçкĕретĕн мăшкăланине пĕтерес пулать. Вĕсем подписчиксене ытла та хисеплемессĕ.

Хисеплес пулать подписчиксене!

ИВ. МОÇЕЙЕВ.

Кĕскен

* **Концерт.** Ишекри (Ишлей р-нĕ) вăтам шкулти хор кружокĕ Сталин йачĕпе тăракан колхозăн 3-мĕшпе 4-мĕш бригадисенче концерт туса иртерчĕ.

А. Алексейĕв.

* **Агрокружок.** Каташри (Йетĕрне р-нĕ) агрокружок организацилени пĕр уйăх иртрĕ. Çак хушăра кружок 16 занйати туса иртерчĕ.

Г. Павлăв.

* **Çĕнĕ пÿртсем.** Алексейĕвкăри (Йетĕрне р-нĕ) „Хĕрлĕ çăлтăр“ колхоз колхозникĕсем çулран çул пуйан та културлă пурăнма пуçларĕç. Кăçал Й. Филиппăв, С. Павлăв, М. Сыпков, В. Сорокин, И. Йатрушĕв колхозниксем çĕнĕрен пысăк пÿртсем лартрĕç.

П. Краснов.

* **Сыхлăх значокĕсем илессĕ.** Нурăсри (Вăрнар р-нĕ) педучилищă çумĕнчи Осоавиахим пуçламĕш организаци 1937—38-мĕш вĕренÿ çулĕнче лайăх ĕçлерĕ. Хал 70 ача ПВХО нормисене отличнă тата хорошо паллăсемпе парса значоксем илчĕç.

ГТО, ВС, ГСО значокĕсем илнисем те чылай.

А. Афанаçйĕв.

Вут-кăвартан сыхланас ĕç лайăх

Кивĕ-Йĕкĕтри (Трак р.) „Болшевик“ колхоз çумĕнчи вут-кăварпа кĕрешекен ирĕклĕ дружинă хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ.

Йал хушшинче кашни колхозникпе йединоличникăн килĕнчех шыв лартнă. Дружинă начальникĕ М. Константинăв йаланах кăмака-трупасене тĕрĕслесе тăрать.

Вут-кăварпа кĕрешмели хатĕрсене, пурне те хатĕрленĕ. Вĕсене тирпейлĕ вырăна майлаштарса лартнă. Пĕр çулталăк хушши ĕçлеме хуралçă уйăрнă. Унсăр пуçне тата икĕ лаша уйăрса панă.

Халĕ йал хушшинче висĕ пысăк пĕве турĕç. Ку ĕнтĕ вут-кăвартан сыхланма та, пахча çимĕçсене шăварма та пысăк усă парать.

Г. Борисăв.

Суд

Çынна вĕлернĕшĕн

Апрелĕн 25-мĕшĕнче Васка-Çырми йалĕнчи (Хĕрлĕ Чутай районĕ) паллă хулиган Йефим Порейкин алиментран хăтăлас майпа Хырлукасси йалĕнчи Йевдокийă Лисайĕвăна уйа илсе тухса, майран бритвăпа касса вĕлернĕ. Çав кунах тата вăл Мижаркасси йалĕнчи Михаил Наумăва вĕлерме хатĕрленнĕ пулнă. Çаксене Хĕрлĕ Чутай районĕнчи милици уйрăмĕ вăхăтра сиссе, Порейкина арĕсленĕ.

Апрелĕн 30-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи халăх сучĕ вырăна тухса Порейкинăн ирсĕр ĕçне пăхса тухрĕ. Порейкина çынна вĕлернĕшĕн 10 çул хушши тĕрмере хупса усрамала, тĕрмерен тухсан висĕ çул хушши суйлав прависĕр хăвармала турĕ.

Шоркин.

ПРОФЕССĂР ЙАН ÇУ-ЂИҢ

Чылай çула çитнĕ професcăр Йан Çу-Ђиң вăрçă пуçланиччен вăрçă ĕçĕ çинчен нимĕн те ăнланман. Йапони интервенчĕсем Китай çине кĕрсе кайсан, Йан Çу-Ђиң Китай çар командованийĕ сĕнĕвне хапăл туса йышăннă. Хебей провинцин Хĕвеланăç пайĕнчи 13 уйесра халăхăн хăйне сыхлакан отрйачĕсене организацилеме тытăннă. Хăйĕн тусĕсемпе тата студентсемпе сыхăннă професcăр октябĕрĕн 4-мĕшĕнче нумай уйессенче пуçланса кайнă партизанла ушкăнсене, йалти самооборонă отрйачĕсене йертсе пыма тытăннă.

Професcăр тата унăн помошникĕсем 100 çынтан тăракан партизанла икĕ отрйад тунă, пĕри Линшоура, тепри Линшанре.

Тачă пĕрлешсе тăракан чăмăр туса, Йан Çу-Ђиң хăйĕн вăйĕсене Тайхан тăвĕсем урлă Хĕвелтухăç Хебейе, Йапони çарĕсен тылне йарать. Çул çинче професcăр отрйачĕ çумне хресченсем тата Бейпинран çăлăнса тухнă студентсем çĕршерĕн пĕрлешнĕ. Çав доброволецсенчен висçĕмĕш отрйад организациленĕ. Партизансем хăйсем паллăртнă вырăна çитлĕ чухне, професcăрăн çарĕ 5 отрйадран тăнă. Çул çинче, йалсенче агитатăр партизансем халăха вăрçă искусствине вĕрентнĕ. Вĕсем кашни йалта хресченсенчен самооборонă отрйачĕсем тунă.

Йапони çарĕн тылне кĕрсе кайсан, професcăр çарĕн пайĕсем пĕчĕк отрйадсене пайланса Йапони интервенчĕсене хирĕç партизанла кĕрешме уйессем тăрăх кайнă, хресченсем тата разносчиксем пулăшнипе отрйадсем хушшинче çирĕп çыхăну тунă. Професcăр çар штабĕ Йапони тытса илнĕ районсенчи хресченсем хушшинче агитацилĕ пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Çак районсенчи йалсенче вăрттăн ĕçлекен партизанла ушкăнсем тунă.

Йапони империалисчĕсене питĕ кураймаи Китай çамрăкĕсем професcăр отрйачĕсене пĕрмайах кĕрсе пынă. Çамрăк арçыначĕсем тата хĕрсем пур çĕртен те професcăр отрйадне пынă. Хĕл касиччен унăн отрйадне Китай çамрăкĕсем пиншерĕн пынă.

Йан Çу-Ђиң отрйачĕсем паттăрла вуннăр рейд тунă. Йапони çарĕсем çине кашни тапăннăссеренех отрйада çĕнĕ доброволецсем кĕнĕ, Йапони çарĕсене туртса илнĕ хĕçпăшалсемпе хĕçпăшалланнă. Йан Çу-Ђиң професcăрăн 3 тата 5-мĕш отрйачĕсем Шансой çине çĕрле тапăнса 2 бомбомĕт тата 40 пăшал туртса илнĕ. Линченре партизансем Йапони çарĕн 50 çынтан тăракан гарнизонне çĕмĕрсе тăкса хĕçпăшал нумай туртса илнĕ.

Халхи вăхăтра Йан Çу-Ђиң професcăр штабĕ 8—10 пин çынтан тăракан 8 пысăк отрйад пĕрлештерсе тăрать, унăн командирĕсем вĕрентекен шкул, партизансен организатăрĕсен шкулĕ тата уйессенче 150 агитатăр пур.

Йан Çу-Ђиң тата унăн помошникĕсем Е Фы, Çуй Лиң-шаң, Ли Гуй-цзйу Китай халăхĕн нацилĕ паттăрĕсем пулса тăнă. Вĕсем йапонецсем çине хăватлă тапăнни çинчен пĕтĕм Хебей провинцинчи халăх хушшинче каласассĕ. Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ, професcăр Йан Çу-Ђиң кĕске вăхăтра хăй тавра 10 пин çын пĕрлештерме пултарнă. Унăн отрйачĕсем Китайăн регуларлă çарĕсемпе пĕрле пулса Йапонин çарĕсене хирĕç кĕрешессĕ, тăшманăн тылне пĕрмайах çĕмĕрессĕ.

(„Синьхуажибао“—Китай).

Редакцине килнĕ çыру

Хисеплĕ редактăр!

Епĕ чухăн çын ачи пулнă. Атте вăтă пирки ĕçлеймен. Епĕ, пурнăç начар пирки, çамрăк пуçпа пĕр йăнăш турăм. Мана совет влаçĕ вăл йăнăша ăнланса илсе, тÿрĕ ĕçлекен çын пулма çул кăтартса пачĕ. Епĕ колхозра тăрăшса ĕçлеме пуçларăм. Колхозниксем манăн ĕçе кура пысăк ĕçсем шанса пама пуçларĕç, вĕренме йарасшăн тăрăшрĕç. Анчах мана районри органсем айăп тунă çын тесе ĕçлеме те, вĕренме те ирĕк памарĕç. Епĕ вара „Чăваш Коммунĕ“ редакцинчен пулăшу ыйтрăм. Редакци манăн пурнăçа шута илсе, инçе çула пăхмасăрах, редакци сотрудникне йарса манăн тĕрĕслĕхе палăртрĕ. Епĕ „Чăваш Коммунĕн“ кăçалхи 33-мĕш номĕрĕнче çырнă статйана вуларăм та, хĕпĕртесе макăртăм, мана тÿрĕ çул çине тухма хавхалантарса çырнăшăн савăнтăм.

Куславкка районĕнчи Çатрак йалĕнчи колхозник Николай Йаковлĕвич ВИШНЕВСКИЙ.

Канмали çуртсене кайассĕ

Ишлей. Ишекри „Болшевик“ промысла ертелĕнчи стаханавецсем Александр Крылов, Афанаси Колцов тата Прасковйа Казаникăва йулташсем кашни уйăхрах ĕç нормисене 150—160 процент таран тултарса ĕçлессĕ. Вĕсем кашни уйăхра 400 штук таран чăпта çапса каларассĕ.

Правлени çак стаханавецсен паха ĕçне хакласа кашнийех укçан преми тата канмали çурта кайма путевкăсем пачĕ.

Арк. Наумăв.

ХРОНИКĂ

— ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ С. Й. Скрынникăв йулташа Хатĕрлевсен Халăх Комиссарĕ пулма çирĕплетнĕ.

— ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ С. Й. Скрынникăв йулташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссарĕн заместителĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

— ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ М. В. Попов йулташа, вăл хăйне хушнă ĕçсене туса пырайман пирки, Хатĕрлевсен Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

— ССР Союзĕн Верховнăй Совет президиумĕ А. Ф. Мерекалăв йулташа ССР Союзĕн Германири полномочнăй представителĕ тунă.

(ТАСС).

ИЗВЕЩЕНИЕ

На заседание выездной Центральной партийной тройки Комиссии Партийного Контроля при ЦК ВКП(б), имеющее быть 14-го мая 1938 года в гор. Чебоксарах, в здании Партколлегии, для разбора апелляций вызываются следующие товарищи:

1. Тохтасьев Степан Тохтасьевич—Шихазановский РК ВКП(б),
2. Окулов Георгий Филимонович—Ибресинский РК ВКП(б),
3. Нефедов Александр Иванович—Ибресинский РК ВКП(б),
4. Швецов Александр Васильевич —Шемуршинский РК ВКП(б),
5. Краснов Николай Дмитриевич—Янтиковский РК ВКП(б),
6. Артемьев Евлампий Дмитриевич—Канашский РК ВКП(б),
7. Железтов Тимофей Капитонович—Канашский РК ВКП(б),
8. Тарасов Михаил Павлович—Шумерлинский РК ВКП(б),
9. Тимофеев Михаил Алексеевич —Шумерлинский РК ВКП(б),
10. Федоров Архип Федорович —Шумерлинский РК ВКП(б),
11. Серебряков Кирилл Семенович—Алатырский РК ВКП(б),
12. Морозов Борис Николаевич —Алатырский РК ВКП(б),
13. Сидоркин Степан Яковлевич —Алатырский РК ВКП(б).

Райкомам ВКП(б) обеспечить явку вышеуказанных товарищей, а также выслать своих представителей.

Партколлегия.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Шупашкарти „Пекарь“ ертелне
аслă бухгалтĕр
тата бухгалтĕрсем
КИРЛĔ
Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.
ПРАВЛЕНИ.
2—0

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне
2 бухгалтĕр
кирлĕ
ЧАССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ.
2—1

ЧĂВАШТОРГĂН ШУПАШКАРТИ ÇĂКĂР ПĔÇЕРЕКЕН САВĂТНЕ
бухгалтĕр
счетовод-картотетчик
çекретар-машинисткă
—КИРЛĔ—
Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Ленин урамĕ 11, çăкăр пĕçерекен савăт кантурне.

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтне
йалан ĕçлеме
Аслă бухгалтĕр
ТАТА
материаллă пай бухгалтĕрĕ
кирлĕ
Условисем пирки килĕшнĕ чух каласмала.

Академи театрĕнче
1937—38 çулсенчи çезон хупăвать
Йулашки спектаклĕсем
Майăн 11-мĕшĕнче
Вырăсла çпектакл
Л. Н. ТОЛСТОЙ
АННА КАРЕНИНА
(5 пайлă)
Аслă режиççор
Г. В. СТРАНСКИЙ
лартать.
Художник
Й. Н. САПОЖНИКĂВ.
Талон № 191 тата 192.
Абонемент № 4—пур талонĕсем те.

ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВĂ ПЕДАГОГИКĂ
ТАТА УЧИТĔЛСЕН ИНСТИТУЧĔСЕНЕ
ийунĕн 20-мĕшĕнчен
зайавленисем илме тытăнассĕ
Кăçал çак факултетсене йышăнассĕ:
истори, чĕлхе тата литературă (специалнăçсем—вырăс тата чăваш чĕлхисем тата литературă), физикăпа математикă (специалнăçсем—физикăпа математикă) тата йестествознани.
Хăш факултета, мĕнле специалнăçпе Педагогикă йе учителсен институтне вĕренме кĕме шухăшланине зайавленире кăтартмала.
Зайавленисене институт директăрĕ йачĕпе 20 пуслăх маркă хурса çак докумĕнтсемпе пĕрле йамала:
1) тĕплĕн çырнă автобиографи,
2) вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан аттестат,
3) паспăрта пĕрле илсе пымала,
4) 3 фото-картăчкă—кашнин çинче хăй ал пусса государствă учрежденинче çирĕплеттерни пулма кирлĕ (картăчкăна çара-пуçăн, 3×4 см. пысăкĕш ÿкерттермеле).
5) Çар тивĕçлĕхне (военнообйазăннăйсен) кăтартакан справкă.
Вĕренме кĕмели испытанисем
августăн 1-мĕшĕнчен 20-мĕшĕччен пуласçĕ, августăн 21—25-мĕшĕсенче студентсен хисепне илессĕ.
Испытанине тăма ирĕк пани çинчен пĕлтерÿ илнĕ хыççăн çеç екзамĕн тытма килмеле.
Института вĕренме кĕмели йĕркесем Чăваш республикĕнчи пур вăтам шкулсенче, районсенчи çутĕç пайĕсенче тата ПСОЛКС районсенчи комитетсенче пур.
Испытани вăхăтĕнче вĕренме кĕрекенсем общежитипе (6—7 кун) тÿлевсĕр усă курассĕ тата хăйсен укçипе апатланассĕ.
Институт адрĕсĕ: Шупашкар хули, Чăваш АССР, Карл Маркс урамĕ, 82. Пединститут.
ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № [illegible]

Гор. Чебоксары, типография № 1, Чувашполиграфтреста. Заказ № 408.